**Уйрăм № хакĕ — 25 пус.** *Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*




Пĕр йенчен çеç хатĕрленнĕскер.

**КОМИÇÇИ ПРЕДÇЕДАТĔЛĔ:** Çук, йурăхлă пулаймарăн, йулташ! Сывлăху начартарах.

**ПРИЗЫВНИК:** Çук, апла пулма пултараймаст. Епĕ виçĕ уйăх хушши призыва хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлерĕм. Кашни куллен пĕрер четвĕрт сĕт ĕçрĕм.

# Асаплă сăмахсем

Хăшпĕр вĕренекен ачасем географипе историйе начар пĕлеççĕ. (Хаçатсенчен).

Сĕтел хушшинче пит тăрăшса вуласа ларакан ачи çине шывланнă куçĕсемпе кăмăлăн пăхса:

— Йăвăр-и мĕн вĕренме?—тесе ыйтрĕ амăшĕ.

— Йăвăр, анне! Мĕн вĕренни пуçран тухсах пырат,—терĕ ача куçĕсене кĕнеке çинчен салхулăн илсе.

— Ан хăра! Испытанире лайăх калатăн.

— „Лайăх" теме аван сана. Калаймасан вара?

— Çуркунне калайманнине халĕ калатăнах ĕнтĕ. Тепĕр класа куçатăнах.

— Çук, куçаймастăпах пулĕ, аннем!

— Ан хăра. Куçатăн. Авă сан кĕнекÿсем мĕн чухлĕ.

— Есĕ, анне, манран çак кĕнекесем тăрăх ыйтха!—тет ача амăшĕ çине ачашшăн пăхса.

— Ыйтма епĕ пĕлетĕп-и?

— Пĕлетĕн. Пĕр-пĕр кĕнекине уçса хур та мĕн тухнине вуласа ыйт. Есĕ хăш кĕнекерен ыйтнине пĕлмеле ан пултăр тесе епĕ сан йенеле çурăмпа çавăрăнса ларăп, пăхмăп.

— Ну, йурĕ,—терĕ те амăшĕ пĕр кĕнекине уçса хучĕ. Вăйсăр куçĕсемпе чылайччен пĕр тĕле пăхса ларнă хыççăн:

— Кам пулнă вăл Жељйабăв?—тесе ыйтрĕ куçне кĕнеке çинчен илсе.

— „Кам" мар... „Мĕн?" „Жељйабăв" вăл—Атăл тăрăх çÿрекен прахут йачĕ. Нумай пулмаст Сĕнтĕрвăрринеле кайрĕ...

— Çапла пулĕ,—терĕ амăш кăмăллăн килĕшсе.— Пĕлетĕн пулсан, кĕнеки тăрăх тĕрĕслемесен те йурĕ. Ак тата „Гаппон" тенĕ кунта. Кам пулнă Гаппон?

— Гаппон? Гаппон мар пулĕ, куппон пулĕ. Облигацин куппон пулат.

— Тен аплах та пулĕ. Куçлăхсăр кураймастăп. Куçлăх илсе килес-и?

— Ан илсе кил. Ку çăмăл ыйту. Йăвăртараххине пар.

— Рио-де-Жанейро мĕн вăл?

— Вăл-и? Китай генералĕ.

— Ак тата тепĕр çĕртен. Мĕн вăл Фурйе?

— Утрав йачĕ. Инди океанĕнчи ларакан мăн утрав йачĕ,—çапла-и?

— Çапла пуљ. Мĕнне кĕнеке çине пăхнă чухне вулаймарăм. Калаха тата: мĕн вăл Тасмани?

— Тасмани-и? Лермăнтăвăн „Герой нашего времени" йатлă произведенин хĕрарăм геройĕ. Ах, анне, пит илемлĕ хĕр пулнă тет вăл Тасмани. Хамăр шкулти Таңăран та илемлĕрех пулнă пулĕ тесе шутлатăп.

Амăшĕ ачи çине чылайччен пăхса тăчĕ. Унтан каллех кĕнеки çине пăхса тепĕр ыйту пачĕ.

— Халĕ мана Парагвай çинчен каласа пар.

— Парагвай. „Кай" сыпăкпа чăваш поечĕсен йачĕсем вĕçленеççĕ. Парагвай—чăваш поечĕ. Поемă сыпăкĕсем çырат.

— Пĕлетĕн пулсан кĕнеки çине пăхмастăп та. Мĕн вăл Алма-атта?

— Англи колонийĕ. Унта индейцăсем пурăнаççĕ.

— Аха. Цейлон мĕн тата?

— „Цейлон" тесе тинĕс çинчи вăйлă çил-тăвăла калаççĕ. „Çмерч" тесе...

— Мĕнле шывсем йухаççĕ Китайра?

— Чан-Кай-ши, Миклуха-Маклай, Йаунзем...

— Хăçан пулнă Пелопонес вăрçи?

— Белопанис... Бело-пан—пољак улпучĕ... Шур пољаксен вăрçи. 1918—19 çулсенче пулнă.

— Кам вăл Прудон?

— Планетă.

— Кала-ха: мĕнле тусем пур Вăтам Азире?

— Ху-малай, Мăн-План, Курак-кум.

— Оренбург ăçта?

— Оренбург-и? Оренбург Мускавра пурăнат. Вăл писатĕл.

— Апла мар пулмала,—тет амăшĕ кĕнеке çине пăхса.

— Есĕ мана арпаштарса йама ан хăтлан-ха, аннеçĕм! Çаплах вăл. Кÿр-ха кĕнекÿна. Хам пăхам.

Ача кĕнеки çине пăхат, тутисем унăн чĕтреççĕ.

— Пĕтĕмĕшпех арпашса тулчĕç. Вĕçĕ-хĕррине шуйттан та тупас çук.

Амăшĕ йĕрипен ура çине тăрат, пуçне сулласа илет те, вăрăмăн сывласа:

— Асаплантараççĕ çав ачасене!—тесе хурат.

Иван Мучи.

---

ДЕМЙАН БЕДНЫЙ.

## ПЫЛ ХУРЧĔ

Йемйешĕл йăвăç пахчинче
Чечеклĕ йăвăç тăрринче
Пыл хурчĕ савăнса вĕçсе сĕрленĕ.
Çерем çинче выртан çĕленĕ:
„Кала, пыл хурчĕ, ма манăннинчен
Сан пурнăçу авантарах-ха",—тенĕ,—
Санпа пĕр хисепрех пулмашкăн тивĕç
епĕр,
Ман сăнă çынсене шиклентерет-тĕр.
Апла сана ма хисеплеççĕ-ха тата,
Çынсем панче пурнатăн каçăн-ирĕн?
Пур-ха вĕт сăнă санăн та,
Унпа сăхатăн есĕ те пит хытă, вирлĕн.
— Куратăп еп: чи кирлине шута илмес-
тĕн,—
Ăнлантарат пыл хурчĕ çĕлене:
Тĕрлĕ майпа вĕт епĕр палăрнă çынсемшĕн,
Вĕт пирĕн пурнăçсем йăлтах расна.
Хĕç-сăннуна ес тапăнма усратăн,
А епĕ—сыхланма хама тапăнасран.

Усли Ваçлейĕ куçарнă.

# Кӗпер урлă

Констаитинăв колхозник Вăрмар районӗнчи Вăтакас йалӗ витӗр йухакан Вăтам Йенӗш шывӗ урлă хывнă начар кӗпер урлă каçнă чухне, кӗперӗ шатăртатсах хуçăлнипе, лашине шыва йанă.



— Тархасшăн малтан есӗ каç.
— Çук, есӗ малтан каç!
— Çук, малтан ху каçса кай!
— Апла мар, малтан есӗ каçса кай.

**РЕДАКЦИРЕН:** Кусем çине çийелтен пăхсассăн, вӗсем питех те ырă кăмăллă çынсем иккенӗ палăрать. Тӗрӗссипе илсе пăхсан, вӗсем пӗр-пӗриншӗн кăмăлсăр çынсем—нихăшӗ те, кӗперӗ ишӗлсе анасран хăраса, йулташӗнчен малтан каçса кайса сăтăр курасшăн мар.

---

## Кăлендар тăрăх калаçнисем

**Çентăберӗн 25-мӗшӗ.**

— Пайанхи кун 1919 çулта анархиссем РКП(б) Мускав комитечӗн çурчӗ çине бомбă пăрахнă.

— Анархиссемшӗн вăл—паллă бомбă. Вăл бомбă анархисăма хăйне сирпӗнтерсе антарчӗ.

**Çентăберӗн 27-мӗшӗ.**

— Пайанхи кун 1841 çулта Иван Ал. Гончаров писатӗл вилнӗ.

— Анчах вăл çырса хăварнă хăшпӗр типсем, сăмахран, Обломовсем пайан кун та чӗрӗ. Хăшӗсем чечекленекен колхозсене те кӗрсе кайнă.

— Апла мар—тӳнтер майлă пулсан (Обломовсем вилӗ пулсан, Гончаровӗ чӗрӗ пулсан) аванрах пулӗччӗ.

# Кашӑк

Ернекун, пасар кун, ҫурӑмӗ ҫине кутамкка ҫакнӑ колхозник хула кооперативӗ лапкине кӗрет те, кутамкинчен ним чӗнмесӗр темӗскер кӗленчи татӑкӗсем кӑларса прикашчик умне хурса, калаҫ:

— Мӗн йышши тавар тытатӑр есӗр—пӑх-ха? Ҫак стакансем вӗри шыва чӑтаймасӑр, ҫийӗнчех ҫурӑлса кайаҫҫӗ. Арӑм сирӗн сухалӑрсенчен ҫӑлса илсе чӑх тӗкӗ татнӑ пек татма хушрӗ... Анчах санӑн та, йулташун та сухал ҫук иккен.

— Нда!—терӗ прикашчик кулса. Унтан хыттӑн ыйтрӗ:—Есӗ вӗри шывне мӗнле йатӑн ун ҫине?

— Мӗнле йамала. Паллах ӗнтӗ, сӑмавар кранне уҫрӑм та шывӗ хӑйех карӗ.

— Мар. Стакан ӑшне малтан кашӑк йатӑн-и?

— Кашӑк-и?—тепӗр хут ыйтрӗ колхозник, кӗленче татӑкӗсем ҫине пӑхса илсе.—Ӑна...

— „Ӑна“ ҫав. Ӑна тыткалама пӗлместӗр есӗр. Чейне ӗҫетӗр, стаканӗсене тыткалама пӗлместӗр. Вӗри шывне йарас умӗн, малтан стакан ӑшне кашӑк йамала, ун пек тумасан ӑҫтан сире ваҙҙи стакансем туса ҫитерес,—терӗ прикашчик шут шӑрҫисемпе выҙаса.

— Кашӑк тетӗн?—терӗ тӗлӗннӗ пек пулса колхозник, картусне сылтӑм хӑлхи ҫинчен сулахай хӑлхи ҫинерех йачӗ, унтан сухалӗ айӗнчи мӑйне хыҫкаласа илчӗ те, шухӑша кайнӑ пек пулса каларӗ:—Хм... Епӗ пӗлмен те. Ну, пар еппин сӑнамалӑх тата тепӗр мӑшӑр. Ес каланӑ пек кашӑкпа сӑнаса пӑхам.

— Ма сӑнамалӑх тетӗн!—терӗ прикашчик, ҫӳлӗк ҫинчен улӑмпа чӗркенӗ тӗксӗм икӗ стакан кармашса илсе.—Ачун ачисем те ку стакансемпе ӗҫӗҫ.—Стакана савӑнӑҫлӑн чӗрнипе шаккаса кӑтартрӗ.

Тепӗр ернерен пасар кун каллех ҫав колхозник ҫӗмрӗк стакансем чиксе кооператива кӗрет. Вӑл ҫӗмрӗк стакансене прикашчик умне кӑларса хурса кӑшкӑрсах каласа йараҫ:

— Каллех улталарӑн! Санӑн стаканусем каллех ҫурӑлса карӗҫ. Кашӑк та пулӑшмарӗ. Пӗрре мар, икӗ кашӑк труках хурса пӑхрӑм. Пурӗпӗрех чӑнкӑрт туса сапаланса кайаҫ.

— Апла пулма пултараймасҫ,—терӗ прикашчик.—Сирӗн вӗри шывӗ урӑх йышши пулнӑ пулӗ.

— Вӗри шывӗ пирӗн первый сорт. Мӗншӗн тесен, ҫӑл шывӗ пирӗн. Ача куҫҫулӗ пек таса Сирӗнни пек мар...

— Тӑхта-ха... Есӗ кашӑкне мӗнлине хутӑн?

— Паллах ӗнтӗ, тимӗр-тӑмӑртан тунине. Чей ӗҫнӗ чухне стакан ӑшне йамалине.

— Ав, ухмах!—кулса йачӗ прикашчик.—Йашка ҫимелине хумалаччӗ. Чей кашӑкӗ унта пулӑшмасҫ. Йашка ҫимели пысӑк та, шывӑн пӗтӗм вӗрилӗхне пластыр пекех туртса илет.

— Пластыр пекех...—кулса илчӗ колхозник.—Тӗлӗнмеле...

— Ун вырӑнне ытти йапала йарса пӑхма та йураҫ. Сӑмахран ҫӗҫӗ. Касмалине йалала туса. Ҫӗҫӗ пур вӗт сан?

Колхозник чӗнмерӗ. Кӑштах тӑрсан ҫиленсе каларӗ:

— Есӗ тата стакан ӑшне пуртӑ хума хушӑн. Вӑл вӗрилӗхе пластыр пекех туртса илӗ. Ну, сан стакануссемпе! Чей ӗҫме тытӑнас умӗн стакансене мӗнле тытмалине вӗренме шкула ҫӳремеле иккен, ес каланӑ пек тусан. Краҫҫин трубисем те ҫийӗнчех ҫурӑлса кайаҫҫӗ. Вӗсем ӑшне те йашка ҫимели кашӑк хурса аппаланмала штоҙ?

— Гражданин ытлашши калаҫса ан тӑр кунта. Авӑ кассӑра жалӑбӑ кӗнеки. Унта ҫырса хӑвар.

— Пире санӑн кӗнекӳ кирлӗ мар. Лайӑх тавар кирлӗ. Кала ес унта, стаканне тӑвакансене, „колхозник ҫиленет“ те. Да.

Кӗленче татӑкӗс не унтах пӑрахса хӑварса, темӗскер мӑкӑртатса лавкаран тухса карӗ колхозник. Прикашчик пӑхса йулчӗ.

**Тобол.**

## Клас тӑшманне килӗшӳллӗ ӗҫ

Ах!.. ах!.., ахлаҫ пайан Марине инке, иртен вара чӗркуҫҫи ҫинче турӑш умӗнчен тӑма пӗлмест.

„Ей, ҫӳлти турӑ, аслӑ турӑ, ман сылӑха каҫар, усал тӗселтен сир“... кӗл тӑваҫ. Те Ишек кутӑн туррине тахҫанах асӑнман, те такампа усал сӑмахсемпе йатлаҫнӑ. „Пӗрелӗхе каҫар“ тенине анчах илтме пулаҫ. Чӗркуҫҫи такам ҫапса ыраттарнӑ пек пулсан тин ура ҫине тӑчӗ. Ку кӗлӗпе лӑпланмарӗ Марине инкен чӗрийӗ, вӑл татах ахлатаҫ. Чир йернӗ тес, чир те йермен, тепӗр ҫынтан таса, патмар ҫӳрет.

Ей турӑ ҫылӑха каҫар, тет. Мӗн пур кӗвви ҫавӑ. Вырсарни кун Марине инке ирех чиркӳве тухса шур кайӑк пек вӗҫрӗ. Чиркӳре каллех чӗркуҫҫи ҫинче турӑш умӗнче, пирӗн такасем ак ҫапла тӗкӗшеҫҫӗ тесе кӑтартнӑ пек, пуҫне урай ҫине ҫапса кӗл тӑваҫ, турӑран ҫылӑх каҫарма тархаслаҫ. Вырсарни кӗлли пӗтсен Марине инке пуринчен кайа пуп патне йулса ун аллине чуп турӗ.

— Пуп атте, мӑй таран ҫылӑхӑм, тархасшӑн каҫарса йар ҫылӑхӑма!

— Мӗн тунӑ есӗ апла, турӑ чури Марине?—тарӑхнӑ пек кӑмӑлсӑр пулса ыйтрӗ пуп.

— Иртнӗ ернере колхоз итеминчен ҫапнӑ тырра виҫӗ пӑт хуралҫӑсем сисеччен вӑрларӑм, ҫылӑхлӑ пултӑм. Тархасшӑн каҫар.

— Колхозӑнне пулсан уншӑн нимӗнле ҫылӑх та ҫук.

— Ма ҫук?—тесе ыйтрӗ хӑйусӑрӑн Марине.

— Мӗншӗн тесен ӗлӗк „никамӑнне те вӑрлама йурамасҫ“ текен турӑ халӗ колхозӑнне вӑрлама ирӗк пачӗ, терӗ пуп.

— Ма колхозӑнне вӑрлама ирӗк пачӗ?—тесе татах ыйтрӗ Марине.

— Мӗншӗн тесен колхоз пирӗн тӑшман.

— Саншӑн тӑшман пулӗ те, маншӑн тӑшман мар вӑл,—терӗ те хирӗҫ Марине, вӑрласа килнӗ тыррине кайала леҫсе пама хӑйне хӑй сӑмах парса чиркӳрен тухрӗ.

**А. Сорокин.**

# Бӳрократла отношени

Филиппăв ӳкерчĕкĕ



— Хм! Иванов бӳрократ иккен. Отношени йаян виççĕмĕш кун, отвечĕ çук.
— Хучĕ çитеймен пулĕ.
— Мĕнле çитеймен. Инçетре мар, авă çавă сĕтел хушшинчех ларать.

## Икĕ счетовод тата акăш-макăш пăтранчăклă ĕçсем

Шупашкар районĕнчи „Рыкша“ колхозĕ пĕчĕк колхоз (40 кил çеç) пулсан та, икĕ счетовод тытать. Пĕри—Григорйĕв комсомолĕс, колхоз пухăвĕпе суйланăскер. Тепри Аниçимăв—1933 çулта колхоз счетоводĕнче колхоз шут ĕçне пăтратса, колхоз ĕçне пăснăшăн сутпа айăпланăскер. Халĕ ăна колхоз председателĕ Лукин хăй тĕллĕн счетовода кĕртсе лартнă.

Вĕсем правленине час-часах пымаççĕ, пырсан вара иккĕшĕ те пĕр харăс пыраççĕ. Вĕсене курсан темшĕн йытăпа кушак аса килет. Вĕсем хире-хирĕç лараççĕ те тем кĕт шутлам пекки туса пĕр-пĕрне шур куçĕсене каларса сиввĕн пăхса илеççĕ.

Пĕр-пĕр колхозник вĕсем патне ĕçпе пырсан Аниçимăвĕ:
— Епĕ пĕлместĕп. Григорйĕвран ыйт,—тет.
Григорйĕвĕ:
— Аниçимăвран ыйт,—тет.

Колхозниксен ĕçкунĕсене ĕçкĕнекисем çине вăхăтра кĕртсе пымаççĕ. Мĕн чухлĕ тырă вырнине, çапнине вăхăтра шута илсе пымаççĕ, çведенисене вăхăтра тăратмаççĕ, йе час-часах суйа тăратаççĕ, т. ыт. те.

Пĕрре епĕ Лукинран:
— Луккин, есĕр мĕншĕн икĕ счетовод тытатăр, пирĕн колхозра пĕр счетовод та ĕлкĕрет вĕт,—терĕм те, Лукин мана хирĕç:
— Виççĕ те тытăпăр,—тесе лаплаттарса хучĕ.

Тĕрĕс, чăнах та Лукинăн пысăк ĕçĕсене шутласа каларма икĕ счетовод сахал, унта 3—4 счетовод та шутласа ĕлкĕрес çук. Кăçал колхозниксем пĕрле апатланмали столовăй туса фермăри усрама йурăхсăр сыснасене пусас тесе йышăннăччĕ. Лукин хăй тĕллĕнех лайăххисене, планпа йышăннинчен сахал хăварса пусрĕ, пĕр лаша сутрĕ, вăкăр пусса сутрĕ, темĕн чухлĕ пăрçа, тырă сутрĕ, анчах укçи ăçта?—ăна никам та пĕлмест. Кассă кĕнеки витĕр каларман. Лукинăн кун пек ĕçсем тем чухлех, анчах ревизи комиççи çулталăкĕпех ревизи тумасăр пурăнать. Çавăнпа ревизи комиççи ĕçĕсене икĕ счетовод тытмасăрах шутласа каларма пулать.

П. Тороней.

### Наукăпа кăштах паллашнăскер

— Пирĕн çĕнĕ служăшчи Иванов никампа та калаçмасть. Те тӳрĕ çын вăл, те тӳрĕ мар,—ăçтан пĕлес ăна. Çын ăшчикки кĕрĕк çанни мар, таварса пăхма çук.

— Ма таварса пăхас. Ренген çутипе пăхас.

# Интервйу

**Америкă писателĕ Марк Твен калавĕ.**

*Американсен чаплă писателĕ Марк Твен (чăн йачĕ Самуеԓ Клеменс) çурални кăçал 100 çул тултарчĕ. Вăл 1835-мĕш çулта çуралса 1910-мĕш çулта вилнĕ*

*Марк Твен вак буржуалă писател-йуморис хăйĕн калавĕсенче вăл буржуалă тĕнче çитменлĕхĕсенчен йĕкĕлтесе кулаԏ.*

*Çак „Интервйу“ йатлă пĕчĕк калава „Капкăн“ вулакансене Марк Твен пултарулăхĕпе палаштарас шутпа пичетлетпĕр. Ку калавра Марк Твен капиталиссен хаçачĕсенче ĕçлекенсенчен тăрăхласа илет.*

Хыткан, хыпаланчăк тата пĕр вырăнта лăпкăн ларма пĕлмен çамрăк çын епĕ кăтартнă пукан çине ларчĕ те хăй „Буревестник“ хаçатра ĕçлени çинчен пĕлтерсе:

— Епĕ сирĕн пата пĕр калаçупа килсеччĕ; хам шутпа, ку ĕçе есĕр хирĕç мар пуԓ, тесе шутлатăп та, мĕнле-ши есĕр?—терĕ.

— Килсеччĕ еппин... Мĕн ĕçпе?—терĕм епĕ.

— Интервйупа.

— Аха, ăнлантăм епĕ... Çапла, çаплах ĕнтĕ вăл. Хм... Тĕрĕс.

Çак ир манăн тем пек пуç ыратаԏчĕ. Пуçри шухăшсем темле тĕтрери пек çӳреччĕç. Çапах епĕ, калаçнă çĕртенех вырăнтан тăтăм та кĕнеке шкапĕ патне пырса, пĕр улт-çич минут шкапра кĕнеке шырарăм, унтан хама кирлине тупрăм та каллех калаçма тытăнтăм.

— Вăл сăмаха мĕнле çыраççĕ-ха?—терĕм епĕ.

— Хăшне?

— „Интервйу“ сăмаха. Вăл сăмаха, тархасшăн, есĕр сыпăкласа тăсса калăр-ха.

— Мĕн тума кирлĕ-ха вăл сире епĕ çав сăмаха вăрăммăн тăсса калани?

— Тӳррипе каласан, вăл сăмаха тăсса сыпăкласа калани мана пĕрте кирлĕ мар. Епĕ вăл сăмах мĕне пĕлтернине çеç тавçăрса илесшĕн.

— Тĕлĕнмеле йапала! Вăл сăмах мĕне пĕлтернине калама пултаратăп епĕ, анчах есĕр чăннипех-и вара?

— Ăнлантарса парăр-ха, тархасшăн. Есĕр мана вăл сăмах мĕнле çырăннине калăр. Çакăншăн епĕ сире пысăккăн тав тăваттăм.

— Калас еппин: и-н, т-е-р, интер, вйу...

— Апла пулсассăн, вăл сăмах „И“ саспаллинчен пуçланаԏ еппин!

— „И“ саспаллинчен çав.

— Аха, апла пулсан, çавăн пиркийех ăна епĕ нумай вăхăт шыранă.

— Хм... Урăх мĕнле саспаллинчен пуçланаԏ, тесе шутланă-ха есĕр вăл сăмаха?

— Куратăр-и, епĕ... лайăхах пĕлместĕп те. Манăн кунта акă енциклопеди словарĕ пур. Çав сăмаха епĕ словар вĕçĕнче, ӳкерчĕксем хушшинче тупăнмĕ-и, тесе пăхкаланă. Анчах ман словар такçан авал кăларнăскер те нимех тэ тупаймарăм.

— Хаклă тусăм, есĕр ун пек ӳкерчĕке кирек мĕнле çĕнĕ кларăмра та тупас çук. Каçарăр мана, хаклă тусăм, епĕ сире пĕрте кӳрентересшĕн мар, анчах есĕр, епĕ шухăшланă пек, ытла та интелигентлă мар мĕн. Тархасшăн, есĕр çакăншăн ман çине ан çиленĕрччĕ.

— О, тарахасшăн, пĕрте ан куԓанăр! Ку сăмахсене епĕ сахал мар илтнĕ, маншăн ырă пулас мар текен, тата ырă пулманнинчен нимте çухатман çынсем ун çинчен мана сахалах мар каланă. Ку тĕлĕшрен вара епĕ калама çук паллă çын пулатăп.

— Ĕненетĕп, сер... Есĕр пĕлетĕр пулмала, халĕ кашни чапа тухнă çынпах интервйу тăвас йăла пур.

— Ку чăнах-и вара? Епĕ кун çинчен илтмен-ха. Ку йапала вăл пит те интереслă пулмала. Мĕнле майсемпе тăваççĕ-ха ăна?

— Пулаԏ те çке çавăн пек шанчăксăр çын! Хăшпĕр чухне ăна патакпа тусан та лайăхчĕ. Анчах йаланхи пек тусан ăна çапла тăваççĕ: интервйу тăваканни ыйтаԏ, интервйу параканни хирĕç калаԏ. Хăш-пĕр çĕрте халĕ çак интервйупа ăнран кайнă ĕнтĕ. Итлĕр-ха, сер, епĕ сире виç-тăват ыйту парасшăн, вăл ыйтусем урлă епĕ сирĕн хăвăрăн, тата обчăлă пурнăçăран хăш-пĕр интереслă ĕçĕрсене çутатасшăн. Мĕнле шутлатăр есĕр?

— О, епĕ савăнсах, савăнсах йышăнатăп. Манăн халĕ пăртак ăс-тăн йапăхрах та, анчах есĕр ун çине пăхмăр, тесе шутлатăп епĕ. Манăн калама çук хăйне манерлĕ ăс-тăн, ăна тĕрĕс мар ăс-тăн тесен те йурамала. Хăш чухне вăл сиккипе кайаԏ, хăш чухне вăл ик ернере те пĕр-пĕр вырăна çитеймест. Çакă вăл маншăн пит пысăк хуйхă.

— Йураԏ. Ан куԓанăр, сер. Есĕр тăрăшăр кăна.

— Есĕр калалă пекех тăвăп еппин. Ĕçе мĕн пур кăмăлăма хурап.

— Тав! Ыйтусем пама ирĕк паратăр-и ĕнтĕ?

— Тархасшăн, тытăнăр ĕнтĕ.

Ыйту. Миçĕ çулта есĕр?

Ответ. Ийуԓре вунтăхăр тултарса çирĕмĕшне кайатăп.

Ы. Чăнах-и? Епĕ сире вăтăр пилĕк тултарса, вăтăр улттă çине кайнă, тесе шутлаттăм-ха... Ăçта çуралнă есĕр?

О. Миссурире.

Ы. Хăçан есĕр кĕнекесем çырма пуçланă?

О. 1836-мĕш çулта.

Ы. Мĕн калатăр есĕр? Мĕнле пултăр-ха вăл ĕç? Сире хаԓ вунтăхăр çул кăна çке?

О. Пĕлместĕп. Мана хама та хăш чухне тĕлĕнмеле туйăнаԏ.

Ы. Чăнах ку ĕç тĕлĕнмелескер... Хăвăр пĕлекенсем хушшинче чи чаплă та чи паллă çын тесе есĕр кама шутлатăр?

О. Аарон Бура.

Ы Сире вунтăхăр çул кăна пулсассăн, мĕнле-ха есĕр унпа паллашма пултарнă?

О. Ман пурнăçа есĕр хамран та лайăх пĕлетĕр пулсан, мĕншĕн-ха сирĕн кун çинчен ыйтас?

Ы. Каçарăр, сер, епĕ кăна ахаԓтен çеç каларăм. Хăш вăхăтра есĕр Аарон Бурпа паллашнă.

О. Епĕ унпа ăна пытарнă чухне паллашнă. Вăл мана ун чухне шавлама чарчĕ, тата...

Ы. Ах, тур-тур-тур!.. Есĕр ăна пытарнă çĕрте курнă пулсан, вăл вилнĕ пулнă пуʒ-çке; вилнĕ пулсан, ăна шавлани-шавламанни пурĕпĕрех пулман-ши?

О. Калама пултараймастăп. Хăш-пĕр тĕлĕшрен вăл калама çук пысăк оригинал марччĕ-и-ха?

Ы. Анчах епĕ çапах нимте ăнланаймастăп. Вăл сирĕнпе вилнĕ çĕртенех калаçрĕ темерĕр-и-ха есĕр?

О. Вăл вилнĕ, тесе каламарăм-çке.

Ы. Апла пулсан вăл вилменчĕ-и ун чухне?

О. Пĕрисем, вăл вилнĕ, теприсем—вилмен, тетчĕç.

Ы. Есĕр хăвăр мĕн шутланă ун чухне?

О. Ку ĕç мана тивмен те, мĕн шутламала пулнă-ха манăн? Мана пытарман-çке, ăна пытарнă!

Ы. А есĕр мĕнле?.. Хăвăр?.. Ну, ку ĕçе пăрахăпăр еппин. Ăна çутатаймасăрах хăвармала пулĕ. Ирĕк парсассăн, епĕ урăххи çинчен ыйтăттăмччĕ. Хăш числара есĕр çуралнă?

О. 1693-мĕш çулта, октăберĕн 31-мĕшĕнче, тунтикун.

Ы. Мĕн калатăр есĕр? Кун пек пулма пултараймаст. Хăвăр пасăр анчах каланă тăрăх сире ун чухне 180 çул пулнă! Мĕн калама пултаратăр есĕр, ер, кун пирки?

О. Мĕн калам, каламали ним те çук.

Ы. Малтан ыйтнă чухне есĕр хăвăрах: мана 19 çул, тесе каларăр-çке, халĕ 180 çул, тесе калатăр. Мĕнле ăнланас-ха апла çакăн пек тĕлĕнмеле пысăк ăрасналăха?

О. Чăнахах есĕр те вăл ăрасналăха сисрĕр-и? (Пĕр-пĕринне аллисене чăмăртаççĕ). Мана хама та пĕр хут çеç мар ĕнтĕ ку ĕçре ăрасналăх пур пек туйăннă, анчах епĕ вăл ĕçе халччен пĕр те уççăн туйса илеймен. Мĕнле есĕр пур ĕçе те лайăх пĕлсе тăратăр!

Ы. Тав тăватăп епĕ сире, сер, ырă сăмахшăн! Сирĕн шăллăрсемпе йăмăкăрсем пулнă-и?

О. Мĕн калатăр? Пулнă пулĕ тесе шутлатăп, анчах лайăххах астăваймастăп.

Ы, О, ку сăмахсем епĕ илтнисенчен чи тĕлĕнмелисем пулаççĕ!

О. Чăнах-и? Мĕн-ха вара сире çав тĕрлĕ тĕллентерет?

Ы. Пăхăр-ха кунта! Кам сăнĕ çакăнта çтена çинче çакăнса тăрат? Ку вара сирĕн шăллăр мар-и?

О. А, епĕ тин астуса илтĕм. Есĕр астутартăр-ха мана: ку çын вăл чăнахах ман шăллăм Виʒйам пулат, епĕр ăна Биʒ, тесе чĕнетĕмĕрччĕ. Йуратнă шăллăм Биʒ!

Ы. Мĕнле? Вилмен пуʒ-çке вăл?

О. Çук, вилмен пуʒ-ха, тетĕп. Анчах ун çинчен епĕр нихăçан та тĕрĕссипе пĕлмен. Кунта никам пĕлмен тарăн вăрттăнла ĕç пур.

Ы. Хуйхăлă ĕç, пит те хуйхăлă. Апла пулсан, вăл хыпарсăр çухалнă пулĕ?

О. Пĕтĕмĕшпе илсен, çаплах пулат пулмала. Епĕр ăна пытартăмăр.

Ы. Пытартăр еппин! Вăл вилнипе вилменнине пĕлмесĕрех пытартăр-и вара?

О. Ах, мĕн калаçатăр есĕр? Пытарнă чухне вăл вилнĕччĕ.

Ы. Çук ку ĕçе епĕ нийепле те ăнланаймастăп. Есĕр ăна вилнине пĕлсе пытартăр-и вара?

О. Çук-çке! Епĕр ăна, вăл вилнĕ пуʒ, тесе çеç шутланă.

Ы. Аха; епĕ ăнланатăп. Вăл çĕнĕрен чĕрĕлсе тăчĕ еппин.

О. Çук, апла мар, заклад хурсах çапăçма пултаратăп, апла мар, тетĕп.

Ы. Ĕмĕрте те кун пек йапала илтмен. Такам вилĕ. Такама пытарнă. Ăçта-ха кунта никам пĕлмен вăрттăнла ĕç?

О. Çавăнтах, есĕр каланинче! Çав есĕр каланинчех! Куратăр-и, вилнĕ шăллăмпа епĕ йĕкĕрешччĕ. Пĕрре çапла ваннăра шыва кĕртнĕ чухне, пире, епĕр ун чухне çуралнăранпа икĕ ерне çеçчĕ, арпаштарса йанă та çухатнă, çавăн чухне вара пĕри ваннăра путса вилнĕ. Анчах никам та хăшĕ вилнине пĕлме пултараймаи. Пĕрисем: Биʒ вилнĕ пулĕ, тесе шутланă, теприсем—епĕ вилнĕ пулĕ, тенĕ.

Ы. Ку чăнахах, вара тĕлĕнмеле ĕç. Хăвăр вара мĕнле шутлатăр?

О. Ăна пĕлмешкĕн епĕ пĕтĕм тĕнчене парăттăм. Çак хăрушă, малтанах пӳрнĕ никам пĕлми вăрттăнлăх пĕтĕм ман пурнăç çине тĕксĕм мĕлке ӳкерет. Анчах епĕ сире хам çекрета уçса парам-ха. Халччен епĕ ăна пĕр чĕрĕ чуна та каласа паман. Йĕкĕрешсенчен пĕрин сулахай алă тупанĕ çинче пысăк турпалли пурчĕ. Вăл турпалли манăнчĕ, çав турпаллилĕ ача ĕнтĕ путса вилнĕ те!

Ы. Лайăх, анчах апла пулсассăн епĕ кунта нимĕнле вăрттăнлăх та курмастăп.

О. Чăнахах курмастăр-и? Ну, епĕ куратăп. Анчах кирек мĕнле пулсассăн та, ман атте-анне урăх ачине пытарса йанăшнине епĕ хам та нимĕнле те ăнланаймастăп. Анчах, чарнăрха! Тсс! Кун çинчен ман арăм пур чухне ан калаçăр. Турă пĕлсе тăрат, унăн кунсăр пуçне те хуйхăпа ĕçсем сахал мар.

Ы. Лайăх-ха. Малтанхи вăхăта епĕ сиртен пайтах материал илтĕм-ха. Пит те тав тăватăп епĕ сире мана çав тĕрлĕ лайăх йышăнса илнĕшĕн. Пуринчен ытла мана есĕр Аарон Бурра пытарни çинчен калани килĕшрĕ. Йулашкинчен, ман: мĕн пирки есĕр Аарон Бурра паллă та чаплă çын вырăнне шутланине пĕлес килет, çакăн çичен есĕр мана каласа параймăр-ши, тетĕп епĕ.

О. Е, ку мана ним те мар. Тепри ун çине пăхмала пулсан та пăхас çук... Проповĕт пĕтрĕ. Пытаракансен ушкăнĕ çăва çине кайма хатĕрленнĕччĕ ĕнтĕ, тупăкне те виллипе пĕрле тĕплĕн кăна урапа çине хунăччĕ, вăл, сасартăк тупăкран тăчĕ те, урапан мăлти ларкăçĕ çине лавçăпа çуммăн ларса:

— Йулашки хут пăхса пырам-ха хама мĕнле пытарнине,—терĕ...

Çакăн хыççăн интервйу илекен çамрăк çын ура çине тăчĕ те хисеплĕн кăна пуçне тайрĕ те тулала тухрĕ. Пит те кăмăллăн калаçакан çынччĕ. Вăл тухса кайсан вара вăл тухса кайнишĕн пайтах вăхăт хуйхăрса тăтăм. Анчах мĕн тăвас? Вăл çук ĕнтĕ. Мĕн тĕрлĕ ырă çынна çухатрăм.

Вырăслинчен куçарни С. Лашманăн.

# Хире-хирĕç улшăну

Чутайри „Кирăв“ колхоз правленин заçедани пайан. Вĕсем кĕрхи тулă ăçтан, йепле майпа тупса акса хăварасси çинчен сӳтсе-йаваççĕ.

— Пĕлтĕр кĕрхи тулă акса хăвараймарăмăр, ниуштă кăçал та çавăн пекех пулаť,—тет колхоз председателĕ Никитин.

— Райçĕрĕçпайне кайса пăхас пулаť!—теççĕ ытти колхозниксем.

— Вăл, ара, пĕлтĕр те тупса параймарĕ-ха.

— Вăл тупса параймасан кам тупса патăр тата. Вĕсене хăш колхоз мĕн акни паллă вĕт,—шавлаççĕ колхозниксем.

Çапла калаçса ларнă вăхăтра çырусем валеçсе çӳрекен колхоз кăнцељарине кĕчĕ те, колхоз председателне çыру тыттарчĕ. Председателĕ конвертне çурчĕ те, конверт ăшĕнчен тухнă пĕчĕк хут татăкĕ çине чылайччен никама ним шарламасăр пăхса ларчĕ. Унтан савăнăçлăн йăл-л-л кулса илчĕ те:

— Ну, йулташсем, кăçал кĕрхи тулă акмасăр йулмастпăр, нимĕн хăрамали те çук. Ак пире райçĕрпайĕ кĕрхи тулă акма план йанă, пирĕн мĕн пурĕ 3 га акмала, тулă вăрлăхне Мăн Сĕнтĕр колхозĕнчен илсе килмеле,—терĕ Никитин йулташ райçĕрĕçпайĕнчен илнĕ хут татăкне колхозниксене савăнăçлăн силлесе кăтартса. Епĕ те председател аллинчи хут татăкне хам алла илтĕм те, колхозниксене саспа вуласа пама тытăнтăм.

— Аван,—терĕç колхозниксем райçĕрĕçпайĕнчен йанă хут татăкне вуласа тухсан. Епĕр завхозпа иккĕн лаша кӳлтĕмĕр те, ыраш тийесе Мăн Сĕнтĕр колхозне тулă вăрлăх туйанма вĕçтертĕмĕр.

* * *

Епĕр Мăн Сĕнтĕре çитсе кĕтĕмĕр.

— Тăвар лашуна, тăвар!—çухăрса йачĕ Мăн Сĕнтĕр колхоз председателĕ лаша кӳлсе тăратнине курсан.

— Ма?—ыйтрĕ лешĕ председател мĕншĕн лаша тăварма хушнине ăнланаймасăр.

— Ав, Чутайсем хăйсем ех пире ваљљи тулă вăрлăхĕ илсе килеççĕ,—терĕ председател епĕр тулли лавпа пынине курсан пирĕн йенеле пăхса.

— Чăнах та-çке,—терĕ те, завхоз кӳлсе тăратнă лашине тăварса картана хупрĕ.

— Ну, пире ваљљи тулă вăрлăхĕ хатĕрлерĕр-и?—ыйтрăмăр Мăн Сĕнтĕр колхоз председателне тăп чарса.—Кĕраки акма вăхăт çитрĕ вĕт.

Председател пирĕн çине нумайччен ним шарламасăр пăхса тăчĕ. Тăрсан, тăрсан:

— Мĕн есĕр шӳт туса калаçатăр-и, йе тĕрĕссипех?—ыйтрĕ пирĕнтен Мăн Сĕнтĕр колхоз председателĕ.

— Шӳт туса мар, мĕнле шӳт туса, тĕрĕссипех,—тетпĕр завхозпа иккĕн.

— Кай! Ан тĕлĕнтерĕрех,—терĕ пире председател,—хăçан акнă епĕр кĕрхи тулă. Пире сирĕнтен 7 га акмалăх райçĕрпайĕ хут туса панă, сирĕн хăвăрăн пире 7 га акмалăх тулă вăрлăхĕ ыраашпа улăштарса памала, а есĕр пирĕн пата килеттĕр.

— А, епĕр хăçан кĕрхи тулă акнă тата?—тетпĕр епĕр те. Тавлашма тытăнтăмăр Мăн Сĕнтĕрсемпе.

— Есĕр, тен, ĕненместĕр пулĕ, йулташсем, ак на, мейĕр. Райçĕрĕçпайĕнчен панă хутне вуласа пăхăр,—терĕ те Сĕнтĕр колхозĕн председателĕ хутне тыттарчĕ. Пирĕн завхоз хутне илчĕ те, хыттăнах вулама тытăнчĕ.

> В Сундурскому колхозу.
>
> Райзо провождает план озимого сева на 1935 г. Ваш колхоз должен засевать 7 га озимого пшеница К об'мену озимого пшеница вам прикреплен Чербаевский колхоз. Об'мен производется на рожь цен-на
>
> ЗавРайзо—Лебедев.
> Верно Агроном—Волков.

Вуласа тухсан:

— Ť-фу у, тăм пуçсем!—тесе пĕрер суртăмăр та, лашана çавăрса кайалла, Чутайала вĕçтертĕмĕр анчах.

Ну, куратри, йулташсем, йепле аван ĕçлеççĕ Йетĕрнери райçĕрпайĕнчи пуçлăхсем. Чутайсене кĕрхи тулă вăрлăх туйанма Мăн Сĕнтĕре йараççĕ, Мăн Сĕнтĕрĕсене—Чутайа. Анчах Чутайĕнче те, Мăн Сĕнтĕрĕнче те, райçĕрпайĕ иртнĕ кĕркунне вăрлăх тупса парайман пирки, кĕрхи туллине акса тăвайман.

**Марк Дангер.**

## Ултăкунлăх йĕрки

Трак районĕнчи Мăн Шетмĕ йалповĕн Шор Пайраш йалĕнчи лавкин прикашчикĕ Иван Çеменчă августăн 1-мĕш кунĕнчен ернери кун йĕркисене çĕнĕрен улăштарса хунă. Акă сăмахран: Августăн 1-мĕш кунĕ—„пайан Трака каймала, ыран кил“ темели кун; августăн 2-мĕш кунĕ—„пайан Мăн Шетме тавар илме каймала, ыран кил“ темели кун; августăн 3-мĕш кунĕ—„пайан ревизи пулаť, ыран кил“ темели кун; августăн 4-мĕшĕ—„пайан канмали кун; августăн 5-мĕшĕ—„пайан прикашчиксен совешчанийĕ пулаť, ыран кил“ темели кун; августăн 6-мĕшĕ—„пайан йерçейместĕп, кĕрӳсем патне каймала, ыран килĕр“ темели кун.

Çапла ĕнтĕ ĕçсем Шор Пайраш йалĕнчи кооперативра. Колхозниксем кулленех прикашчика кĕтеççĕ. Кирлĕ таварсене колхозниксем вăхăтра илеймеççĕ. Мăн Шетмĕ йалпо пуçлăхĕ Борис Љубимăв та çавă йышши йĕрке çине çителĕклĕ таран çавăрăнса пăхмаст.

**Иван Илйинкай.**

## Сăлтав пуртан

Мартынкассинчи „Хĕрлĕ хĕвелтухăç“ (Трак р). колхозри Çпиридонăвă Марийе кăçал ку таринччен те 6 ĕçкунĕ çеç тунă.

**Бригадир:** Марийе, мĕншĕн есĕ йĕтем касма каймарăн?

**Марийе:** Каккуй йĕтем касма кайма, кĕçĕр çĕрĕпех тĕлĕкре йĕтем касрăм. Талăкĕпех ĕçлеме пултараймастăп.

**Ив. Илйинкай.**

# Кино-драмă

*Зощенко.*

Театăра епĕ хурламастăп. Анчах кино çапах лайăххах. Вăл театăртан усăлăрах. Сăмахран каласан, кинона пырсан тумтирсене хывмаççĕ, çакăн пирки те кăсйесенче вунă пус кĕмĕлсем упранса йулаççĕ. Тата кинона килнĕ чухне сухалсене хыртарасси çинчен шутласси çук—тĕттĕм çĕрте питкуç палăрсах каймасть.

Кинора курмали пӳлĕме кĕнĕ чухне çеç йапăх. Кĕме йăвăртарах. Кĕнĕ чухне пăчăртаса вĕлерме пултараççĕ.

Ытти йенчен илсен, ытти пит те лайăх вара. Çăмăллăнах пăхăнать.

Çапла пĕрре арăм çуралнă кун тесе арăмпа иксĕмĕр кинона кино-драмă курма кайрăмăр.

Билетсем илтĕмĕр. Кĕтме тытăнтăмăр.

Халăх тем чухлĕ пухăннă. Пурте тата алăк патĕнче тăпăртатса тăраççĕ.

Сасартăк алăк уçăлса кайать те алăк çумĕнчи йĕрке пăхакан хĕрача:

—„Атăр, кĕрĕр“,—тесе каласа хурать.

Малтанхи самантра пысăках мар хĕсӳ пуçланса кайрĕ. Мĕншĕн тесен, кашнийĕнех лайăхрах вырăн йышăнас килет-çке.

Халăх алăк патнеле кĕпĕрленсе пычĕ. Алăкра халăх ни унтала, ни кунтала кайаймасть—пробкă пулса тăчĕ.

Кайрисем тĕртсе тăраççĕ, малтисем ниçта та кайаймаççĕ. Мана сасартăк хĕстерсе лартрĕ те пулă майлă сылтăмала илсе кайрĕ.

Ей, ами,—шухăшлатăп хам,—алăка çĕмĕрсе пăрахас марччĕ, тетĕп.—Граждансем,—тетĕп,—турăшăн, хуллентерех, тетĕп. Алăка,—тетĕп,—сыппа çапса çĕмĕрсе пăрахма пултаратăр, тетĕп.

Темле йухăм пулса тăнă—пĕр чарăнмасăр кĕпĕрленсе килеççĕ.

Хысра тата темле вăрăм мăйахлă етем тăрать те мана пĕрте кулътурăлă мар, чавсипе чышать. Шеремет ачи, çурăма шăтарать вĕт.

Ку шуйтана епĕ урапа та тапса пăхатăп.—Гражданин, хăвăр путсĕр ĕçĕрсене пăрахма ыйтатăп, тетĕп.

Сасартăк мана пăртак çĕклесе хăпартрĕç те çамкапа алăк çумне пырса тăрăнтарчĕç.

— Вăт, ами,—тесе шутлатăп хам,—алăксене çынсемпе çапса тĕпретме пуçларĕç, тетĕп.

Алăкран пăрăнса кайма шут тытрăм. Пуçпа çул уçса пыма тытăнтăм. Йамаççĕ. Куратăп тата, алăк хăлăпĕ çумне йĕмпе çыхланса кайнă. Йĕм кăсйипе çакланнă.

— Граждансем, çăмăлтарах,—тетĕп хам,—çынна кунта хăлăп çумне çаклатнă, хурах!—тесе кăшкăратăп.

— Хăвăртрах вĕçерĕнĕр. Кайрисем те кунта сирĕн пекех курма кĕресшĕн,—тесе йатлаççĕ мана хысалтисем.

Пĕр чарăнмасăр мана малала туртаççĕ, алăсене хускатмала мар хĕстерсе лартнă, ăстан вĕçерĕнесха унта?

— Чарăнăр-ха шуйтансем!—тетĕп хам.—Чарăнăрха йĕм кăсйине вĕçерĕнтерем, тетĕп. Малтан алăк хăлăпĕсенчен хывăнса хăтăлма ирĕк парăр-ха, йĕм материалĕ çаплах çурăлать.

Итлеççĕ-и унта? Вĕсем хăйсене ним пăхмасăр сĕкĕннĕ. Çумрах пĕр лайăх тумланнă çитĕннĕ хĕр тăрать.

— Ырă çын, тархасшăн, тепĕр йенеле çаврăнса тăрăр-ха. Ирĕксĕрех мана кунта йĕмсенчен кăларса илеççĕ,—тетĕп вăтанса.

Мĕн калаçмала унта. Хĕр хăй те кăвакарса кайнă, хăралтатма, вилме пуçланă. Ман çине пăхасси мар, пĕтĕмпех пăхма пăрахасси çинчен шутлать.

Сасартăк, тавтапуç сире, каллех çăмăлтарах тĕртсе кайрĕç.

Хам: хăлăпран вĕçерĕнтĕм-ши, йе йĕмсенчен кăларса илчĕç-ши?—тесе шутлатăп.

Çак вăхăтра сасартăках алăк хушшинче иртсе кайма анлăрах шăтăк пуррине куртăм.

Пĕтĕм тулли кăкăрпа сывласа йатăм вара. Пăхкалатăп хам. Пăхатăп: йĕмсем те çумрах. Пĕр йĕм пĕççи кăна икĕ пайа çурăлса кайнă, çӳренĕ чухне кимĕ шăналăкĕ пек хумханса пырать.

Ак мĕнле вăл, ами, кино куракан çынсене салтăнтараççĕ, тесе шутлатăп.

Çакăн пек туласа пăрахнă сăн-пуçпа кино курмали пӳлĕме арăма шырама кĕретĕп. Пăхатăп, арăма чи мала, музыкă калакансем патне пĕр кĕтессе çапса хĕстерсе хунă. Ларать вăл хăй вырăнĕнче, ларать те тухма та хăрать.

Çак вăхăтра, тавтапуç сире, електрицăна та çӳнтерчĕç. Кино кăтартма пуçларĕç.

Кино-картинă курни çинчен сире нимех те каласа пама пултараймастăп. Картинă пĕтиччченех епĕ йĕмсене йусаса лартăм.

Пĕр булавкă, тавтапуç сире, арăмăн хăйĕн тупăнчĕ. Темле ырă кăмăллă хĕрарăм хăй кĕпи çинчен тăвата булавкă тупса пачĕ. Урайĕнче кантăра татăкĕ тупрăм. Çур сехет шырарăм ку кантрана.

Йĕмсене çыхкаларăм та булавкăсемпе чиксе турткаларăм.

Çак вăхăта, тавтапуç сире, картинă та пĕтрĕ. Вара киле таврăнтăмăр.

Куçарни **С. Л.**

---

**Вутпуççисем**

** Пысăк Йенкасси (Вăрмар р.) йалсоветне кĕнрекен çырма урлă каçса çӳрекен виçĕ кĕпертеиккĕшне йусамасăр хăварнă. Йалсовет председателĕ Йегорăв А., кĕпер урлă каçса çӳренĕ чухне, кĕперĕн шăтăкĕсене курас мар тесе, куçĕсене аллисемпе хупласа каçса кайать. (М. Иенкас).

** Йĕпреç районĕнчи Хурамалти вулав çурчĕ виçĕ уйăх ĕнтĕ хупă тăрать. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Соколов йулташ виçĕ уйăх вулав çуртне пыма хатĕрленет, анчах кайма тухсассăнах, ăçта кайма тухни çинчен манса кайса, кайала таврăнса килне кĕрсе ларать. Тытса вулав çуртне çавăтса каймасан пырса кĕме пĕлес çук унта.

** Октăбĕр районĕнчи (Тутар республикă) Чăваш Менчи колхозра кĕрхи тырă тасамар вăрлăхпа акнă. Килес çул таса ыраш вырăнне, „тасамар“ йатлă ӳсен тăран вырса илесси ĕмĕтленеççĕ. (А. А. А.).

# Килес çула йултăм

Пĕтĕм тĕнчипе паллă писатĕл, усала хирĕç тăма хушман паллă ӳкĕтӳçĕ, аслă çын Лев Толстой Матĕрне Микулайне çав тери пысăк сăтăр туса хурассине кам малтанах пĕлсе тăма пултарайнă. Никам та пĕлеймен. Анчах епĕр асăннă паллă писатĕл Лев Толстой пирĕн Матĕрне Микулайне кăçал кĕркунне питех те пысăк сийен туса хăварнине питĕ аван пĕлсе тăратпăр епĕр.

Матĕрне Микулайĕ хăй, кăçал вăтам шкула пĕтернĕскер, аслă шкула кĕрсе вĕренсе тухсан критик пулса ĕçлеме шухăшланăскер, çав пулса иртнĕ ĕç çинчен çапла каласа пачĕ:

— Аслă шкула кĕнĕ чухне ним хĕрхенмесĕр „провал" туса хураççĕ. Сăмахран, пĕр ачаран Фамусăв кам пулнă?—тесе ыйтрĕç. Ăнланатăр-и мĕн тери йăвăр ыйту! Кам та пулсан çав ыйтăва хирĕç калама пĕлĕ-ши? Сăмахран, есĕ пĕлетĕн-и?

— Епĕ-и? Епĕ пĕлетĕп.

— Йурат пĕлетĕн пулсан... Епĕ те пĕлетĕп: Фамусăв—купец пулнă. Вăл купец теме пĕлмен.

Микулай ман çине çĕнтерӳлĕн пăхса илчĕ те, малала калама тытăнчĕ:

— Анчах мана телей пулчĕ,— терĕ.— Кĕретĕп. Пыратăп сĕтел патне. Манран ыйтаканни пит-куçĕнчен пăхсан, кăмăллă çын пек туйăнат, анчах пит чейескер пулнă хăй. Вăл ман çине кăмăллăн пăхнă пек пулса: Каласа пар-ха мана... Толстой сочиненисенче хресченсем мĕнле курăнаççĕ? Сăмахран: „Война и мир" романра мĕнле?—терĕ. Тĕрĕссипе каласан, епĕ ку ыйтăва панăшăн пит хĕпĕртерĕм. Толстой? Толстойа епĕ пĕлетĕп, „Азеф" курнă унăнне. Унăн романĕсене те пĕлетĕп. Çавăнпа епĕ çапла пуçласа йатăм: „Толстойăн чăн хушамачĕ Щеголĕв..."

Матĕрне Микулайĕ кăштах сывлăш çавăрса илсе чарăнса тăчĕ. Епĕ ыйтрăм:

— Мĕн пулчĕ вара?—терĕм.

— Малала мĕн пуласси... Екзамен тăваканни ман çинеле темскерле кăмăлсăран пăхса илчĕ те, çапах епĕ хăраса ӳкмерĕм. Çапла каларăм: Толстой произведенинчи халăх питĕ вайлă. Сăмахран, Митькăна халăх паттăрĕ теме те йурат. Вăл Çеребрйаннăй кнйаçа хупса хунă алăка хулпуççипе тĕртсех ишĕлтерсе антарнă... терĕм. Çакна каласан, мана екзамĕнатăр пӳлсе хучĕ.

— Ма пӳлчĕ вара?—тесе йури ыйтрăм Микулайран кулса.

— Мана „провал" тăвасшăнах пӳлсе хучĕ пулмала,—терĕ Микулай сассине çӳлерех хăпартса.— Вăл мана арпаштарса йарасшăн: Епĕ Лев Толстой çырнă „Война и мир" çинчен ыйтатăп, есĕ Алексей Толстой çырнă „Князь Серебрянный" çинчен калатăн, терĕ.

— Есĕ хирĕç мĕнле каларăн?

— Толстой пĕрре çеç вăл, терĕм.—„Князь Серебрянный" романа чăнах та „Война и мир" теме пулат, мĕншĕн тесен, унта Иоан Грознăй патша тунă вăрçăсемпе мирсем çинчен кĕнеки тăршшипех çырса каласа парат...

— Екзамĕн ыйтаканни мĕн терĕ вара?

— Вăл-и? Вăл хĕрелсе карĕ те, нимех те чĕнеймерĕ. Кайран çеç: тепĕр çултан кил, терĕ. Тĕрĕс-и çав? Сан шухăшупа мĕнле?

Епĕ: тĕрĕссипе тĕрĕс марри çинчен каламастăп,— терĕм. Анчах Толстойсем чăнах та пĕрре кăна мар, виççĕ вĕсем,—терĕм.

Вăл манпа килĕшмерĕ. Епĕ тавлашса тăмарăм. Ал парса уйăрăлса кайрăм.

Килес çул вăл та Толстойсем виççĕ пулнине пĕлсе ĕненессе шансах тăратăп.

Л. О.

# Ухутник

Вăрахăн пăшала çĕклесе тĕллерĕм те, курока туртса йатăм. Пĕри вĕçсе тарчĕ, тепри... унччен те пулмарĕ тепĕр кĕтесрен, такам етемми, пăшал кĕрслеттерсе йачĕ... Çав хушăрах епĕ персе ӳкернĕ кăвакала пĕчĕк, усал, ула йытă таçтан сиксе тухса йарса илчĕ те, вĕçтерчĕ анчах вăрманалла... Хуçи йăхăрса та чарăймарĕ...Ку кам етемми тесе, çакăн патне тухрăм. Ман умра пĕчĕкрех лутака, кайала купарчалă, кӳпшек питлĕ тирпейсĕр уссилĕ çын пуçне хыçса тăрат...

— Ма есĕ çын персе ӳкернĕ кайăка йыттуна тыттартăн? Тата ăçтисем есĕ, кам, ухутник ушкăнĕнче таратăн-и, билет пури сан?—тесе тарăхнипе хытăн ыйтрăм çакăнтан.

— Хĕрлĕ Çырсем, Максăм пулатăп епĕ... кунта колхоз пăрусене пăхса пурнатăп-ха... ахаљтен йулташлăха пăшал илсе килтĕм... Ухутник билечĕ ман пĕлтĕрхи анчах, вăл та пулин килте сĕтел çинче выртат... Тапак пур-и сан, чĕркаттар-ха,—тесе ыйтрĕ мантан Максăм. Тӳреме улăхса лартăмăр та, чĕлĕмсене чĕркесе тивретсе туртма пуçларăмăр.

— Есĕ пăшал тытатăн— ухутника çӳрекелетнĕ-ха вара?

— Пĕлтĕрпе кăçал çӳресех кайман, тата тепĕр йенчен пăшал хатĕрĕсем те тупмали çук...

— Члена кĕрес пулат, вара хатĕрсем туйанма пулат.

— Унсăрăнах май кӳрекенчĕ те-ха епĕ, халь вăрманта пăрусемпе пурăнса йер çсех каймастăп-ха. Епĕ йалан тепĕр ухутникрен мала ӳкер келесе: лартан хăш пĕр çĕре пĕр вун пĕчĕк капкăн аш татăкĕсем хурса—çĕр каçиччен сахалтан та, пĕр—виç-тăват кушак лекет те... Хулана илсе кайсан, тарне те, пуллине те параççĕ... Халĕ те кушак парса илнĕ хатĕрсемпе пурăнкалатăп-ха. Тата краççин, супăњ мĕн чухлĕ туйаннă пулĕ кушак парса. Краçин ман пĕр-ик четвĕрт ытларах ларат... Хамăр йалта кушаксем пĕтрĕç-ха, Попăљ йалне виçĕ капкăн кайса лартрăм-ха, мĕн пулат килет,—терĕ мана Максăм çав хушăрах йытти тĕмесем хушшипе вăрахăн, тутине çуллакаласа утса тухса пирĕвтен айаккарах тăсăлса выртрĕ.

— Кăçал 31 кушак çеç тытса... Пĕлтĕр вăт май курсаччĕ...

— Çынсенчен айăхах мар вĕт.. Татах йалти кушаксене тытса пĕтерсен шăшисем ĕрчесе кайма пултараççĕ!—терĕм Максăма.

— Ничерта пĕлеймеççĕ... Шăшисем чăнахах та вара питĕ хунаса карĕç. Пур кĕлетре те туллийех. Кăçал çуркунне колхоз кĕлечĕсенчен сахалтан та 20 пăт ытла пулĕ шăши ванчăкĕ тухрĕ. Мана мĕн? —терĕ Максăм аллине сулса.

— Сирĕн йалта урăх ухутниксем çук-и вара?

— Пур... çапкаланса çӳреççĕ ухмахсем... Çулталăк хушшинче пĕрер мулкач тупкалаççĕ арантан. Левонти пур— вăл мулкача питех пăхмаст: йытăсем тыткалат те, тата çулла килти кăвакалсене кайăк кăвакалĕ тесе йатса килкелет... Хĕвел те тухрĕ, ӳплене кайса çынсем тăриччен мĕн те пулин „шăхăртса" çийес пулат, выçă пурăнмала мар,—тесе Максăм тăчĕ те, йыттине шăхăрса чĕнсе ту йеннеле уттарчĕ.

— Пулаççĕ çынсем.. ма чаракан çук-ха çавăн пек „ухутниксене"—тесе шутласа илтĕм колхоз кĕлетĕнчи тырă-пулла шăшисем тапăннине аса илсе. Тăтăм та епĕ те чăтлăхала, мĕн пурра çукка пăхкаласа кĕрсе карăм...

Çырма вĕçĕнче, лăпамра пĕр пĕчĕк ула пăру вилли çине сиксе тухрăм. Пăруне пăшалпа персе вĕлернĕ... „Кăна ахаљ мар, Максăм мулкач тесе персе ӳкернĕ ĕнтĕ" тесе утрăм малала.

В. И. Иванов

## Шывлă вырăнта

„Хĕрлĕ трактăр“ колхоз (Похвиçнĕ р., Куйбышĕв крайĕ) ĕне витине нӳрлĕ, шывлă вырăна тунă.




Вите тесен, вите мар,
Кӳлĕ тесен, кулĕ мар...
Пахча тесен, пахча мар,
Хăт ес кунта кĕрсе лар.

Ку темскере лартнă чух
Пуçлăх пуçĕ пулнă-ши?
Ай чăнах та ӳсĕр чух,
Проектласа хунă-ши?

# ТИСКЕР ШАВ

Шав-шав-шав!.. Кĕр-кĕр-кĕр!— тăвакан сасăсем хăлхана килсе кĕчĕç.

Тĕлĕнмеле сасса итлесе Тракри „райПО столовăйĕ" патне çывхартăм. Çавăнтан тухаť иккен кĕрлесе тăракан сасă. Аптăраса йĕри тавра пăхса çаврăнтăм. Тултан пăхма нимех те мар ĕнтĕ. Столовăй столовăйех. Çак тĕрлĕ шавлама сăлтавĕ те çук пек. Анчах чӳречисем кĕç-вĕç тухса ӳкес пек карласа, чанкăртатса лараççĕ.

Кĕрес тесе алăк патне пытăм. Мана хирĕç виç-тăват çын мунча кĕнĕ чухнехи пек тар йухтарса тула сиксе тухрĕç.

— Вăт ку аван!—терĕ пĕри çапса ӳкернĕ пек тӳрех курăк çине тӳнсе.—Пайан виç сехет кĕтнипех çисе тухрăмăр... Карай Иванчă, ыран та çапла ертелпе çисе тухăпăр и?

Виç хут кĕме тытăнса та, халăх çаврăннипе мана урама тĕке-тĕке кăларса тăратрĕç. Тăваттăмĕш хут пикенсе çынсен урисем хушшипе те пулин такки кĕтĕм кĕтĕмех. Ара кĕмесен йураť-и-ха вара? Мĕн пирки шав тухнине пĕлес килет.

Сăнама ырăрах пултăр тесе, кăмака картлашки çине хăпарса лартăм. Мĕн пулаť те мĕн килет-ха.

Икĕ пӳлĕмĕнче те шăп тулли халăх, кивĕ йалти пухури пек, ура çинче мăкăртатса тăраť. Чӳречесем çинче те, манашкал кăмака картлашкисем çинче тĕренсе лараkансем те чылай. Пĕр виç-тăват çын çĕç пукан пеккисем çинче кĕç урайне персе анса халăх ури айĕнче таптанас пек, чĕтресе лараççĕ. Пукан тавраш урăх курăнмасť.

Пур столовăйри халăх кухђа кĕрекен алăк çине тилмĕрсе пăхнипе епĕ те пуçа çавăнтала çаврăтăм. Пĕр çур сехет кĕтсенех хайхи алăк уçăлчĕ. Сехре хăпнинпе купăста йашкч пек симĕсленсе кайнă официанкă подноспа виç тарелкă пăтă йатса тухрĕ. Çынсем мĕкĕрсе йарса пĕрре çеç аллисене кармашрĕç: пĕр самантра тарелкесем те, поднос та çухалчĕ. Официанкă чăснă аллине хутлатмасăрах айăплă сасăпа:

— Подноса та пулин парăр, атту пуçлăх шалу тытса йулаť,— тесе тархасларĕ. Подноса тупса пама мар, чăснă алăсем татах сăмси патнеле çывхара пуçланипе официанкă кухђа чăмса алăка тĕкелерĕ.

Ура çинче тăрса пăтă чаплаттарса çинисем илтĕнкелерĕç...

Шыва путакан çынсем пек чун хавалĕпе çухăрнă сасăсем хăлхана хупларĕç.

— Пăтă-ă-ă!.

— Çийес килет!

— Пăтă парăр!

Столовăй çурчĕ чӳхенме пуçларĕ. Çуйăхакан çынсене лăплантаранçи пулса кассă чӳречи пек пĕчĕк алăкран пĕр тарелкă пăтă тухса ларчĕ. Халђхинче официанкă та, унăн аллисем те курăнмарĕç: кашни çыннăнах пурнăçĕ хăйĕншĕн хаклăçке-ха...

Пĕр çын шавланипе усă курса пăтта çаврăрса илнĕччĕ, ыттисем астуса илсе тарелкăна йĕри-тавра çаврăрса тытрĕç. Тахăшĕ пăтă тытнă алла йĕппе чикрĕ. Вĕри пăтă пĕрин çара пуçĕ çине тухса ӳкрĕ. Ак, тапранчĕ, хайхискер, ахăрсамана! Кăшкăрашу, макăрашу, йатлаçу!.. Шикленсе ӳкнипе тата çӳлерех хăпартăм.

Тарилке тухса ларнă пĕчĕк алăкранах çăмламас пуç курăнчĕ:

— Тархасшăн лăпланăр, йулташсем,— йăваш сасăпа тархасларĕ вăл халăх лăпланнă пек пулсан,— какай пĕтрĕ. Така пусас пулаť. Ӳркенменнисем пулăшма тухăр.

Пилĕк-ултă çын вăрăм—чăсланкă çĕçĕсем, пуртăсем йатса урама тухрĕç. Столовăйĕнче çав-çавах чарăнми шав.

Таçтан пуçлăх тухса ман пата пычĕ.

— Сывлăх сунап, ырă çын!—терĕ вăл уçă кăмăллăн.—Есĕ хаçат репорťорĕ... Халăх шавланине итлетĕр-и? Тӳррипех каласан, ку ĕçлĕ кунсенче пулакан шав çеç ха. Канмали кунсенче курас пулсан... Чуť çеç манман—çийессу килмест-и? Хыçалти алăкран кухђа кĕр. Лармали çук та, тăркаласа та çийĕн...

Васкаса çисе тухса тискер шавпа антăранă пуçа емелleme тӳрех пулђницăна вĕçтертĕм.

---

Çак шава, çак хуçасĕр çуртри пек йĕркесĕрлĕхе никамах та асăрхашăн мар. Шавĕ кулленех. Ăна епĕр учитĕлсен канашлăвĕнче те, тата унран кайран та сăнасаттăмăр.

**Хв. Уй-хир**

---

# Кулма шут тытрăм

Епĕ Чăваш пединститучĕн çĕнĕ çуртĕнче. Йĕри тавра пăхатăп та: вĕрçĕнĕ кабинетсем, çап-çутă зал, чечексем. Кĕрсен тухас килес çук ку илемлĕ çуртран.

Çакăн пек ӳсĕмсене курса савăннăскерĕн çав тери хĕпĕртесе кулас килчĕ. Кулă килнипе пĕтĕм ӳпке-пĕвер кăтăкланса илчĕ. Савăннипе пĕтĕм çан çурăм вĕри шывпа сапнă пек пĕçерет.

Ман умран студенкăсем иртсе пыраççĕ. Стой, тетĕп хама хам, йурамасť капла, ухмах тейĕç. Институтри çĕнĕ столовăйне антăм. Манăн куç умĕнче вĕрçĕнĕ столовăйĕн вĕрçĕнĕ међу çакăнса тăраť.

Хамăр ӳсĕмсене курса савăннăскер тӳсеймерĕм, лах, лах, лах!—кулса йатăм сĕтел хушшине кĕрсе ларсанах.

— Мĕн ахăлтататăн есĕ сĕтел хушшинче, апат çимели талон илтĕн-и?—терĕ пĕри.

Апат çийес тесе талон илме черете тăтăм. Пĕр тенкĕ те çирĕм пус тӳллесе талонпа çăкăр илессишĕн вăтăр минут иртертĕм. Черетре чылай тăнăскерĕн ура шăнăрĕсем кĕсел пек çемçелсе кайрĕç. Ывăннă пек пултăм. Кулас килни пĕтсе çитме пуçларĕ. Анчах тĕпсĕр подвалти черет çаплах ӳсет. Пĕрин ĕнсине тепĕри çур сехет хушши

черет тăрса пăхать. Подвалĕ тăвăр, черечĕ пысăк. Çук, кулас килми пулчĕ. Савăнăç та чакрĕ.

Столовăйĕнче талонпа илнĕ йашкана çисе тăраннă хыççăн, тем шыв ĕçес килнĕ пек туйăнчĕ. Унта пăхатăп, кунта пăхатăп—шыв çук.

— Сирĕн кунта шыв хăш кĕтесре?—ыйтатăп пĕринчен

Чăр! пăхрĕ типшĕм официанкă.

— Кунта шыв тытмастпăр епĕр. Ĕçес килсен çўлти коридора тухса ĕçмеле,—терĕ те вăрт çавăрăнса карĕ. Шыв патне çитме пĕр çĕралă метр утмала.

Портфĕле çĕклесе общежитине çитрĕм. Пĕрри ман умранах чейник çĕклесе пусма тăрăх сиккипе хăпарса карĕ.

— Ай, çухăрса йатăм чейник шăтăкĕнчен вĕри шыв фонтан пек ура çине сирпĕнсен, мĕн ухмахшĕн шăтăк чейникпе шыв çĕклет?..

Хамăр пўлĕмри чейнике илетĕп те епĕ те шыв илме анатăп.

Ах, хăйамат, чейникăн хăлăпĕ çук. Тĕпне çемçе çăкăрпа саплană. Йурĕ, тетĕп, шывĕ ан йухтăр.

Вĕри шыв чейникре пăсланать. Пăсланакан шыв фонтан пек чейник тĕпĕнчен пĕрĕхет.

— Ай! Алă пиçсе кайрĕ! Тĕп пултăр!—тетĕп,—чей ĕçесси. Мĕне кирлĕ вĕри шыв.

Çиленме пуçланăскер тула тухрăм. Пĕр студенкă аллине çуса тăрать.

— Поҫă,—тетĕп,—мĕн есĕ кун каçиччен алуна çуса тирне çўхететĕн? Хĕлле тăм илме пултарать.

— Ан калаç-ха. Алла вĕри шывпа пĕçертсе йатăм, чейникĕ шăтăк мур.

Кăмăл хуçăлчĕ. Кулас килмест. Илемлĕ общежитинчи илемсĕр йĕркесем кулассине мантарсах йачĕç.

— Кулмастăп урăх. Алă пиçсе карĕ,—çапла тарăхкаласа выртса çывăрса карăм.

Епĕ çывăрса тăнă çĕре сакăр сехет персе те çитнĕ.

Заҫатирен йулас мар тесе умываҫник патне пит çума угатăп. Куç умĕнче черет. Çын хыçĕнче çын. Икĕ общежитийĕпе пĕр умываҫник çеç. Умываҫникре пĕр харăс виçĕ çын çеç çăвăнма пултарать. Виççĕн çăвăнаççĕ, аллăн вĕсем çăвăннине пăхса тăраççĕ.

Черет. Çук, кулас ĕмĕт пĕтрĕ.

Черет тăркаласа пит çурăм.

— Халĕ ĕнтĕ ирхи зарйадкăна тăвататăп,—тетĕп стена çинче репродуктăр шыраса. Çук. Репродуктăр çук.

— Ваҫушка, пĕлтĕр кашни пўлĕмрех пурчĕ вĕт вĕсем?

— Комендант патĕнче те çук,—ответлет старшком.

Ĕнер кулас килнĕ ĕмĕт пĕтрĕ. Тутамсем çур шит пек малала тăсăлчĕç.

— Йурать капла та, ларса çырткалас та вĕçтерес урока.

Пукан çук. Пўлĕмре çичĕ студент. Çичĕ студента тăвата пукан. Тăваттăн ларса чей ĕçеççĕ, виççĕн ура çинче.

— Ĕçместĕп чей, кирлĕ мар вĕри шыв. Манăн ура шăнăрĕсем хамран ытлаши-им?

Чунăм кўренчĕ. Кулас килмест.

Куç умне институтăн çĕнĕ çурчĕ килсе тухрĕ. Ĕнерхи кун пек пуçланчĕ. Столовăйĕнче черет, пит çума черет, чейникĕ шăтăк. Ку илемсĕр йĕркесене кура кулас килмерĕ пайан манăн, кулас килмерĕ.

**И. Кашлинке.**

# Çилос пирки

— Килте пур-и, халех çилос шăтăкне пымала!—тесе урам йенчи кантăкран шаккаса карĕ çурçĕр иртни ик сехетрен.

— Кам пулчĕ вăл?—тесе чылайччен шухăшласа лартăм та арăма вăратса çилос патне утрăм. Урамра халăх пĕр 15 çын пулĕ, пурте хăшĕ витре, хăшĕ пуртă тата урăх йапаласем йатнă.

Мĕн пур Йункăри (Тутаркас р.) „Мичурин" колхозникĕсем „пуш-а-ар!—тесе урамсем тăрăх чупаççĕ. Волотăпа утрăмăр васкаса çилос патне. Халăх витресем йатнă та нимĕн тумасăр пăхса тăраççĕ.

— Ма-а-ак!—çухăрчĕ çилос шăтăкĕнчен.

— Ай, шуйтан кĕнĕ,—халăх пăлханать.

Кирук Кĕркури чупса çитрĕ. Халăх ăна сырăнчĕ.

— Аçта пушар? Ма суйан?

— Епĕ сире çилос патне тенĕ вĕт, авă колхоз пăрушсем шăтăка кайнă, ха-ха-ха!—пурте шăтăка пăхаççĕ. Шăтăкра виçĕ пăру. Пурте чĕтреççĕ.

Пăрусене кăларса утрăмăр пурте килеле. Кăвак çут килет.

Çапла виçĕ кун иртрĕ, каллех колхоз бригадирĕ çилос шăтăкĕ патне чĕнсе карĕ.

Халĕ пурте лăппăн утаççĕ çилосала.

— Мĕн пур шăтăкра?

— Шапасем тулнă. Çавна тасатмала,—приказ каларĕ çилос бригадирĕ Кирук Кĕркури. Пĕр çирĕм кĕреçе ывăтсан шапасене тасатрăмăр.

Çўрçĕр иртсен пуçларĕ те çапла вара шăп икĕ талăк чĕреслетсе çăмăр çурĕ.

— Çилос шăтăкне витресемпе тухăр,—каллех епĕр апат çисе ларнă çĕртен шаккаса карĕç.

— Чуп арăм!—терĕм те арăм пĕр хăрăк витрепе чупрĕ çилос патне. Нумай тăмарĕ, хашкаса кутăн чупса çитрĕ.

— Мĕн тата?

— Лайăх витре кирлĕ.

— Шапасем тулман-и?

— Çук, çăмăр шывне тăкмала,—терĕ те каллех çĕнĕ витре илсе чупрĕ çилос патне.

Тепĕр кунне çилоса куракксемпе тултарса та лартнă. Тата ернерен каллех:

— Тимĕр сенĕкпе çилос патне калех тухăр,—тесе бригадир урампа кăшкăрса çўрет.

Çилос шăтăкĕ лайăх таптаса хытарман пирки, айалала анса çурра çитнĕ.

— Тавай, тасатăр çак шăтăка!

Çилос çинчи шывне тасатма тапратрĕ ударлă бригадă.

— Фу-у!—тесе чупса тарчĕ çилос бригадирĕ усал шăршăран.

— Çĕрсе кайнă!—пурте сухăраççĕ çилос çине пăхса.

Çилос шыв кайнăран çĕрме пуçланă пулнă.

Çапла „Мичурин" (Тутаркас р.) колхоз 25 тоннă çилоса çĕртрĕ.

**Ив. Чувак.**

# Пӳртри çӳпçап

## „Е“ тăрри

Пĕринче Çĕрпӳ хули урамне курса çӳреме тухрăм. Пĕр çурт тĕлне çитсен вывĕскă курах кайрăм: „Çĕрпӳ хулинчи поотребителĕ ушкăнĕн, тир, çетек илекен склаче“ тенĕ. („Ч“ саспалисене кивĕ орфографипех çырнă).

Вывĕскă çыракана „е“ тăрне лартма йăвăр пулнă-ши, йе сăр нумай пĕтесрен хăранă-ши?—çавна пĕлес килет.

„Магазин № 3 ГОРТа. Сăкăр сутакан“ тенĕ. Çĕрпӳре „çăкăр“ тес вырăнне „сăкăр“ темеççĕ пулĕ-çке?—çавна та пĕлесчĕ.

**Туканаш.**

## Барометăр тăрăх

Елĕк районĕнчи „Озерок“ колхозра протоколсене те чăвашла, те вырăсла çыраççĕ—протоколне вуласа тухакансем никам та мĕнле чĕлхепе çырнине калама пултараймаççĕ. Акă „Капкăн“ архивне килнĕ протоколсенчен пĕр пунктне илсе кăтартăпăр:

„О приеме вновь в члену колхоза заявление Васильева Ивана.

Постановили приняли с облодисментом единогласно. Малтан ун çинчен актă составить тунине отменить турĕçĕ единогласно. Лаша пур озимой обобществляет единогласно“... тата ытти те.

Редакцире пирĕн барометăр пур. „Озерок“ колхозăн протоколĕсене вуланă хушăра редакцири барометăр „тĕтре“ кăтартаччĕ... протоколне çыракан Гаврилăв пуçĕнче (райçутпайĕнче ĕçлекенскер).

## Моторлă кимĕпе

Асхвари (Канаш р.) „Хĕрлĕ хĕм“ колхоз сысна ферми пуçлăхĕ Байков Константин, сыснасемшĕн тăрăшас вырăнне, çынсем хĕрсе ĕçленĕ чухне, нимĕн пĕлми пуличчен ĕçсе ӳсĕрĕлсе çӳрет.

Пĕрре Шăхасанта ĕçнĕ те, шыва кĕрсе кайнă. Виле пуçласан çынсем туртса кăларнă. Есĕ мĕн тăван тесен: сысна хăвалатăп, тенĕ вăл.

Тепре çавăн пек ним пĕлми пуличчен ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ те, сысна ферминчи кухнăри хуран ăшне шыва кĕрсе ларнă. Сысна пăхаканĕ: мĕн тăватăн?—тесе ыйтсан: моторлă кимĕпе кайатăп. Иван Йегорăч, лар, лар!—тесе кăшкăрать.

Сыснисем вилеççĕ, сысна ферми пуçлăхĕ лаххана кĕрсе ларса „моторлă кимĕпе кайатăп“, тесе тĕлĕнтерет.

**Сухан.**

## Уçакансем

Авал Христофор Колумб Америкă уçнă. Анчах уçни хăйшĕн нихăш йенчен те усăлă пулман, ăна тытса тĕрмене хупса лартнă. Халĕ, йулташсем, ун чухнехи пек мар. Авă, Тутаркас районĕнчи Йункăри. йалпо прикашчикĕ Поляков Йван лапкан касси е уçса 3.600 тенкĕ шăхăртса кайса растратă тунă Анчах ирĕкрех çӳрет-ха, йусанма кайассине шут хăша илмест.

## Мамăкĕ усăлă

Малтикасри (Вăрнар р.) „Пĕрлешӳ“ колхозăн кантăрĕ çумламан пирки ниме йурăхсăра тухнă. Çав кантăр пирки колхоз председателĕ çапла калать:

— Аптăранă ĕнтĕ. Кантăрĕ пĕтнĕ. Пиçенĕн мамăкĕнчен çытар тăвас, туни çилос тума йурĕ, тет.

Пиçен мамăкĕнчен тунă çитар килес çул çум вăхăтĕнче пуç айне хурса çывăрма чăнахах та аван пулать ĕнтĕ ăна.

**Çмилков.**

## 7 лаша.

Йаркункă йалĕнчи (Елĕк р.) колхоз председателĕ Абрамăв халхи вăхăтра вылăх-чĕрлĕх ĕрчетесси пысăк ĕç пулнине манса кайнă, маннă пашалу çинĕ пулмала.

Колхозăн 60 лаша пулнă пулсан, халĕ 53 кăна йулнă. Мĕншĕн тесен, пусса, сутса пĕтернĕ. Çавăнпа ăна „Капкăн“ журнал урлă хушаматне Абрамăв мар, „лаша мурĕ“ йатлă хурасчĕ. Абрамăва маннă пашалу мар, „Капкăнăн“ йĕплĕ çăмахне хыпатарасчĕ.

**Иванкай.**

## Чĕлхепе Мускав та тума пулать.

Пирĕн Çĕмĕрле ЗРК председателĕ Коçолков, чĕлхепе тем те тăвать. Вăл çуллахи культурăпа йăла конференцийĕнче те чĕлхипе тем те тума пулчĕ. Халĕ? Халĕ столовăйĕнче апатсене начар пĕçереççĕ. Тирĕксем, вилкăсем, кашăксем çитмеççĕ. Апат илнĕ çĕрте черет. Цехра халĕ те тарелкăпа чей ĕçтереççĕ.

Чăнах та чĕлхепе Мускав та тума пулать.

**Колхозри Ив.**



# ИК АЧА




ТИРПЕЙЛӖ АЧА: — Дарвин теорийӗ тӑрӑх, етем упӑтерен пулнӑ. Апла есӗ те упӑтерен пулнӑ.

ЙАПӐХ АЧА: — Хама ун пек упӑтепе танлаштарсан епӗ ҫиленетӗп. Апла ан кала!

ТИРПЕЙЛӖ АЧА: — Ҫиленетӗн? Упӑтесем тата хӑйсене санпа танаштарнӑшӑн ҫиленеҫҫӗ пулӗ.

---

### Постановленисӗр ӗненмест

— Ҫав тери пысӑк ӗҫе ун пек ухмаха шанса панӑ мӗн есӗр.

— Ухмаха тетӗн? Вӑл ухмаххи ҫинчен постановлени пур-и мӗн?

### Паллӑ

— Кам вӑл?

— Вӑл-и? Паллӑ хулиган.

— Ав мӗнле. Хӑй ҫамрӑк, ҫапах палла тухнӑ.

### Шанман упӑшка

Арӑмӗ. — Ытла та мана шанми пултӑн ҫак ес, Макуҫ. Чӑнне калатӑп, пахчара епӗ никампа та тӑман. Сана ман ҫывӑхри чучӑлӑсем ҫынсем пек курӑннӑ.

Упӑшки. — Ненай, апла тем... Ӳлӗмрен ырӑрах пӑхма тӑрӑшӑп. Анчах ма-ха есӗ пӗр чучӑлине ик-виҫ хут та ыталаса чуптурӑн.

Хв. Уй-хир.

### Ӗшенмен

— Мала иртсе лар!

— Пире кунта та йурӗ-ҫке. Таҫта ӗҫлесе ӗшеннӗ ҫынсемех мар, — теҫҫӗ хӑшпӗрисем.

Ҫавӑн пекех: пире мала тухса лармасан та, кунта та йурӗҫке, — теҫҫӗ Вӑрнар районӗнчи Кавал, Чӑрӑшҫырма, Еҫпепе, Кӗлкеш йалсовечӗсем.

Вӗсем августӑн 10-мӗшӗнчи сведенисем тӑрӑх, укҫа-тенкӗ пухассин виҫҫӗмӗш квартӑл планне пӗр процент та тултарман.

Чӑхӑмҫӑ лашана пушӑпа ҫапаҫҫӗ, анчах кусем лаша мар та, пушӑпа ҫапма йурамаст, „выгӑвӑр" тенӗ хут татӑкӗпе ҫапса, малти вырӑна кӑларса тӑратас пулать. Укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе ӗҫлесе ӗшеннӗ ҫынсемех марҫке, тесе ан тӑччӑр вӗсем.

# Çӳлти вырӑнта

Шупашкар районĕнчи Куҫуша комсомолĕссем очко вăййине çӳлти пусăма ҫартрĕç.



**Никитин:**—Ма ес картна тĕрĕс мар витетĕн?
**Иванов:**—Кун пирки пухура уйрăм ыйту лартса сӳтсе-йавас теместĕни-ха?

## Ентип.

— А, Ентип, есĕ, çывăрса карăн-им? Итлемерĕн-и, пухха кăшкăрчĕç,—терĕ арăмĕ Ентипе айакинчен тĕртсе.

Унтан Кулине инке çывăрса выртакан Ентип çийĕнчен одейала сӳсе илчĕ те, Ентипе такăм сивĕ сăхманпа хуплană пек, сивĕ сывлăш çӳçентерсе илчĕ.

— Пухха кайса пĕр-ик сăмах итлесе килсем ĕнтĕ тата,—тесе ӳкĕтлерĕ Кулине инке.

— Йăлăхнă ĕнтĕ ку собранипеле. Укçа-тенкĕ пирки пулĕ-ха. Кунпала кăçал веç хăлха йуçĕхрĕ уш,—тесе пухăва тухса утрĕ утрех тем чухлĕ ӳркенчĕ пулсан та.

---

Ентип пуху пĕтнĕ çĕре тин кăштăртатса çитрĕ. Чăнахах та, Ентип мучи пĕлнĕ пекех, йалсовет председателĕ йулашки ыйтупала укçа-тенкĕ пуçтарассипе йалсовечĕ кайа йулса пыни çинчен пĕлтерет. Председатĕл сăмаха пĕтерсен Ентип темскер сухаллине каçăртрĕ те:

— Ăçтан халĕ халăхăн укçа тупас, шалу илетпĕр-им епĕр? Çумра виçĕ пус укçа пулсан пайан епĕ вара...—теме пуçларĕ.

— Ма ку сăмаха калаçма ӳркенмерĕн, Ентип! Енĕр анчах ерех лавкинче çĕр тенкĕ сурăн-иç... Ĕçмеле пулсан пин тенкĕ те шеллĕ мар, патшалăха пулсан виçĕ пус та шалкă,—терĕ пухури Йăкăнат.

— Вĕсемшĕн тертленсе лар кашни пухурах!—кĕрлерĕ халăх Ентип çине.

Ентип хуçăлса аннă тенеллĕ урапа пек ни калала, ни малала пулса тăчĕ. Халăх сăмаххи ăна сив çăла чиксе чӳхесе кăларнă пек туйăнчĕ. Тепре мунчари пек тарласа илчĕ. Чăнах та Ентип çумĕнчех çĕр тенкĕ укçа пулнă. Анчах кĕçĕрхи кунах халăхран намăс тесе укçана кăларса тӳллес темерĕ.

— Ыран камран та пулин тупса парăп уш, ытла есĕр ун пекех пулсан,—терĕ те пухуран таврăнчĕ.

Чăнах вара тепĕр кунче Ентип пур парăмсене те тӳлесе татрĕ. Ку кун Ентип пеккисем, парăмсене тӳлесе татакансем чылай пулчĕç. **Сорокин.**

# Капкăнçăн блок - нотĕнчен

## Арăмĕ

— Сана калатăп---чарăн

— Чарăнмастăп—есĕ йулташусемпе ерех ĕçме кайатăн.

— Сан мĕн ĕç... Чарăн, тетĕп!

— Илнĕ шалува каллех ĕçсе пĕтеретĕн.

— Ан кар, çăварна, шуйттан!

— Ай! Хĕнет! Хурах!

— Ан кăшкăр, ухмах!

— Хĕрарăма çапма ăçтан есĕ ирĕк илтĕн...

— Ăна милицийе ăсатас пулаť.

— Милиционер!.. Милиционер!..

— Ан кĕпĕрленсе тăрăр! Саланăр. Мĕн пулнă?

— Акă кунта пĕр усал хĕрарăма хĕнет.

— Хĕрарăм мар, арăмĕ вăл, милиционер йулташ!

— Хĕнеме ирĕк çук. Арăмсене ĕлĕк хĕненĕ. Халĕ йурамасť.

— Ăна тытса хупас пулаť... Пирĕн пек хĕрарăмсенчен ĕлĕк мăшкăлани те çитĕ.

— Ан шавлăр! Гражданка, ку сан упăшка-и?

— Ман упăшка.

— Вăл сана хĕнерĕ-и?

— Пĕлместĕп.

— Мĕнле хĕнемен, епĕ хам куçпах куртăм. Тытса хупăр ăна, милиционер йулташ. Халех тытса хупăр.

— Ав мĕн калаçаť вăл. „Тытса хупăр" тет. Малтан ху упăшка туйан та, кайран ăна тытса хуптар.

— Гражданка, санран ыйтатăп: хĕнерĕ-и вăл сана, хĕнемерĕ-и?

— Хенерĕ пулин. Ку пирĕн килйышри ĕç. Çичĕ йутăн ĕç çук унта. Кайар Митрапан...

— Саланăр!.. Саланăр!.. Ав автомобил çухăрса килет... Саланăр.

Халăх салаваť. Сăран пиншаклă сухал çеç çав вырăнтах йулса, пирусне кăларса чĕртсе йараť те, тутлăн анасласа:

— Киле çитсен пит лайăх ăшалантараť ĕнтĕ кăна упăшки, тесе малала утаť. Н.

## Зашчитник

Сут ларăвĕ вĕçне пыраť. Ыйхăланă нумай мар халăх зашчитникăн вăрăма тăсăлнă сăмахне итлет. Айăпланакан çын мĕнле условисенче пурăнни çинчен, вăл ытти çынсем пек хăйне тивĕçлĕ воспитани илейменни çинчен калаť зашчитник.

Айăпланакан çын куçĕсене оратăр çурăмĕ çинеле йарса тĕлĕнсе кайнă пек пулса итлесе лараť.

— Совет сутне епĕ çак çынна нимĕн айăпланмасăр ирĕке кăларма ыйтатăп. Есĕр ăна, еп калана пек, ирĕке кăларассине ĕненетĕп. Çакăнпа епĕ хам сăмаха пĕтеретĕп,—терĕ те зашчитник халăх çине çĕнтерÿлĕн пăхса, хăй хыçĕнчи пушă пукан çине ларчĕ.

Сут канашлу тумали пÿлĕме кайаť.

Çур сехет иртсен пригăвăр вуласа парасçĕ:

—.. тата... аса илсе... айăпламали фактсем çителĕксĕр пирки... айăплассинчен хăтарса, халех ирĕке кăларса йамала тăвас!

Зашчитник пасар пирĕ йевĕр шап-шурă пулса кайса сут йенеле кăмăлсăрăн пăхса илчĕ.

— Сутйе йулташ, мĕн тесе каларăн есĕ? Пайанах ирĕке кăларса йарас терĕн-и?

— Халех ирĕке кăларас пулаť, терĕм ĕнтĕ. Ăна вĕт, есĕ калана пекех, айăплассинчен хăтартăмăр та, ирĕке халех кăларса йарас пулаť.

Зашчитник тата хытăрах шуралса кайса шур йур пекех пулса карĕ.

— Калăр-ха... ăна... мĕн... ыран ир тин ирĕке кăларса йама йурамасť-и?

— Ма апла?

— Халĕ тулта тĕттĕм. Епĕ хула тулашĕнче, пит тĕттĕм урамра пурăнатăп. Епĕ хуга кĕнĕ çын ман кĕсйере укçа пуррине лайăх пĕлсе тăраť!—терĕ çынсем илтмеле мар шăппăн.

---

## Ĕмĕт

*Васçилйĕв ÿкерчĕкĕ.*




Пĕри: — Тĕлĕнмеле... Ашшĕ пулăç пулнă, а хăй паллă писатĕл.

Тепри: — Ман ача та çавăн пекех паллă писатĕл пулаť пуљ те-ха.. Вĕт епĕ те çирĕм çул хушши пулăç пулнă.

Александр Кăлкан

# Йĕплĕ сăвăсем

## Ыратман пуçа тимĕр тукмак

Аслă Чакри „Арлан“ промколхозра (Вăрмар р.) йăварланнă колхозницăсене отпуск памасăр ĕçлеттереççĕ. Колхоз председателĕн арăмĕ А. Алексейĕвă уйра, хĕрсе ĕçленĕ çĕртех, ача çуратнă.

Çак Алексейĕв чаплă пуçлăх,
Ун чаплă пуçĕ пăхăр пуслăх.
Хирте хĕрсе ĕçленĕ чух
Арăмĕ çуратнă çĕнĕ чун:
— Уа, уа! Илтетри,—тет,—
Кам çĕнĕ уставран иртет?
Анне-и, йе тăм пуç атте
Мана çуратрĕ çак хирте?

## Председател ыйă пулчĕ—витере кахал çеç йулчĕ

Вăрнар районĕнчи Çĕнйалти „Правда“ колхозра лашасене питĕ йапăх пăхаççĕ. Конюхсем ĕçкунĕсем илессишĕн çеç конюхра шутланса тăраççĕ...

Пурăнмашкăн пит лайăх
Витери пур кахала.
Аслă конюх Николайĕв
Хур ами пек какалать:
„Мĕне кирлĕ выльăх чунĕ,
Пултăр пирĕншĕн ĕçкунĕ.
Председатĕл ыйă чух
Ыр курнинчен ырри çук“—
Тетчĕ вăл. Хаьлап кăна
Кĕрсе ӳкрĕ „Капкăна“.

## Сарай тулли сар лаша.

Вутланти „Комбайн“ колхозăн (Трак р.) мĕн пурĕ 40 лаша. Иртнĕ çулхине, лашасене хупма вите пулман пирки, 15 лашана икĕ колхозник сарайĕнче усрарĕç.

Сарай, сарай! Мĕн пулнă-ха питех?
Хупса лартасчĕ чăрсăр çăвара.
Анчах Игнатйĕвшăн раснах вара,
Колхозниксен сарайĕ те вите.

## Икĕ куйан тытакан—нимĕнсĕрех йулакан.

Политотдел колхозра (Çĕрпӳ р.) Йевдокимăв бригадир пĕр вăхăтрах икĕ ĕç тăват. Пĕр ĕçĕ—бригадир тепри—уй хуралçи.

Куçĕсем ун хир сыхлаççĕ,
Аллисем ĕçкун çыраççĕ,
Колхозра—„хуралçă“ теççĕ,
„Бригадир“ тесе чĕнеççĕ.
Вăл пуласшăн пит пуйан:
Трук тытасшăн ик куйан.
Тыррине хирте хуллен
Выльăхсем çийеç куллен.
Çырăнман ĕçкунĕсем
Сумкăра выртаç йĕрсе.

## Уйăрлу

Ăна епĕ музейра тĕл пултăм. Вăл кăвак сухальне çĕр çумне усса пуçне чиксе ларатчĕ. Унăн кивелсе шултăрканă шăмшакки пăрахăçа тухнă урапа тукăнĕ пек пĕкĕрĕлнĕччĕ. Кумса кайнă ухват пек айак пĕрчийĕсем хăйĕн кунçулĕ пĕтни çинчен справкăсăрах ĕнентеретчĕç.

Чылайччен пăхса тăтăм çак пĕр хусканмасăр ларакан сухал хуçи çине. Тӳсеймерĕм:—Асатте, есĕ тĕпсĕр кӳлĕ пек тарăн шухăша кайрăн тем?

Чĕтренчĕ сухал. Кивелсе мăкланнă икĕ куç ман çине вăйсăрăн пăхма пуçларĕç. Чылайччен пăхса ларчĕ вăл. Унтан тăпăрчă хутаççи пек çакăнса тăракан тути хĕрийĕсем васкамасăр сиккеленĕ май калаçма пуçларĕ.

— Епĕ асатте мар—Сухапуçĕ. Халĕ çак касă тăрăх çĕр йĕрнĕ сасă йанăраса килнине итлетĕп.

— Мана та итлеттер çĕр йĕрнине, мĕнле йĕрет вăл: ĕне пек мăйне каçăртса-и, йе йытă пек çăлтăр çине пăхса-и?

Ана йăранĕ çине тăсăлса выртрăм. Хăлхана нӳрĕ тăпра перĕнет. Итлетĕп:—Ах, илемлĕçке колхоз хирĕнчи йурă. Мĕн чухлĕ савăнăç, мĕн чухлĕ телей ку йурăра. Асатте, çĕр йĕрмест, çĕр савăнса кăна йурлать! Есĕ йанăш илтетĕн.

Сухал хуçи ман çине ним шарламасăр çиленчĕклĕн пăхрĕ. Ним шарламасăр тепĕр хут хăлхине тăратрĕ. Чылайччен итлерĕ вăл.

— Çĕр йĕрет!—терĕ татăклăн.

Епĕ çĕнĕ кун çынни вĕрçĕнĕ хăлхана çĕр çумне тытса тепĕр хут итлерĕм. Çав-çавах илемлĕ йурă илтĕнет. Тӳсеймерĕм вара:—Çĕр савăнать. Илгместĕп епĕ йĕрнине. Хăлху ĕçлеме пăрахнă пуль, итле лайăхрах!..

Сухапуçăн сивĕ куçĕ ман куçпа хайаррăн тĕл пулчĕ. Ăшри тăвăл тулаць май, сухалĕ чĕтренме пуçларĕ. Сухал чĕтренĕ май, чĕтрекен саслă сăмахсем ман хăлхана çитсе тăрăнма пуçларĕç:

— Епĕ пурăннă пин çул ытла. Пин çул ытла çĕре кутăн тирĕнсе шăйăрнă. Тăрантарнă пĕтĕм халăха, çавăнпа та историре епĕ чĕрнĕ йĕрсем те пур. Епĕ санран, ачам, пин çул аслă, çавăнпа та пĕлетĕп ытларах. Çĕр йĕрет...

Куç умне тĕтре карнăн туйăнчĕ. Кăвак тĕтре ăшăнче хресчен сухапуçĕпе сухалани курăнчĕ. Хресченĕн ури шăнăрĕсем чĕтреççĕ, сухапуçне тытса пыракан аллийĕпе кашăк сыпаймасть вăл. Вĕрлĕк алăкĕ витĕр хĕл сивви шăхăрса чупать. Вĕрлĕк алăк тулашĕнче уретник нухальапа тăрать. Пӳртри турат умĕнче вăрăм çӳçлĕ упăте хресченрен укçа шăйăрать. Хресчен тăрать. Унăн ури пакăлчакĕ вĕр çĕнĕ саплăк айĕнче чĕтĕресе чӳхенет.

— Çĕр йĕрет!

Пĕтĕм картин куç умĕнчен çухалчĕ. Умра сухал хуçи çеç пуçне усса палăк йупи пек историри паллă кунсене систерсе ларать.

— Есĕ ватă, пин çул ытла хурлăх йурри итленĕскер. Сана çавăнпа та, хăть ватлăхра савăнмашкăн уйхир илемĕ çинчен каласшăн еп.

— Çук илем çĕр çинче.

— Есĕ çук тетĕн. Еппин пăхсамччĕ хăть музей чўречинчен те пулин уйхир çине. Унта ĕçлет хаљ трактăр, есĕ чĕрнĕ йĕрсем: выçлăх, трахом курăнмасть халĕ.

Сухал хуçи чўречерен карăнчĕ... Катара, лере инçетре халăх тырă вырать. Çынĕсем илемлĕ те шап-шурă. Вĕсем йурлани хăлхана килсе кĕрет.

Асатте пăхать. Унăн икĕ куçĕ хĕррине куççуљ тумламĕсем тухса ларчĕç. Хăть музейра та пулин савăнтарас тесе:—Кăçалхи çĕртмене тума тухмарăн, асатте, тен тырă акма тухатăн пулĕ!—терĕм.

Чĕнмерĕ старик. Унăн сасси ĕмĕрлĕхех лăпланчĕ ман куçăм умĕнче.

Сывпулашмасăрах музейран тухрăм.

Кашлинке

## Калмыковăн урнă вăйĕпе ĕçĕсем

Виçĕ уйăх хĕвел ăшинче типĕтнĕ кăмпа пек пĕркеленчĕк, кукăр-макăр туталă çын Калмыков. Уйрăмăнах пĕр-пĕр çынпа харкашнă чух унáн тутийĕ хут купăс пек тăсăлса пĕрĕнет. Анасланă чухне çерçи вĕçсе кĕрсе кайала тухсан та Калмыков сисеймест. Çăварне кайăк-кĕшĕк кĕрсе туласранах пулмала, Калмыков çăварне хĕлле çĕлĕкпе, çулла картуспа хупласа анаслать. Сăмси çинçе, шĕвĕр. Куçĕсем хура. Мăйĕ вăрăм. Пуçĕ арбуз пек çавра. Çўçĕ ула. Ĕлĕк ача чух хăй кутăнĕпе йаланах вăрçса çўренĕшĕн Микуш йатлă йулташĕ пуçĕнчен çыртса пуçтирне татса илнĕ, тет те, вара çавăн вырăнне щурă çўç шăтса ларнă, тет. Калмыкова хыçалтан пăхсан, туйа тăрне арбуз тирсе лартнăнах туйăнать.

— А, Калмыков йулташ, кам пулать çакăнта санатори завхозĕ,—терĕмĕр ийуљ уйăхĕнче канакансем.

— Завхоз кунта пуљи-пуљми çын пулма пултараймасть. Завхоз епĕр пулатпăр!—шĕвĕр пўрнипе кăкрине тĕллесе хăйпе паллаштарчĕ пире.

— Есĕр пулатăр пулсан хавас-ха, епĕр çав санатори хуçалăхĕнчи çитменлĕхсем çинчен калаçасшăнччĕ те,—терĕмĕр епĕр.

— Есĕр ăçтан, райкомран-и, йе редакцинчен?—хирсе лартрĕ ыйтува пирĕн умма.

— Ниçтан та мар, епĕр сывмаррисем,—ответлерĕмĕр.

— Апла сывмаррисем есĕр, хм, манпа калаçасшăн сирĕн хушаматăрсем мĕнле-ха, сирĕнпеле ыран директци калаçĕ,—пĕрĕнсе сарăлса чăсăлакан тугине хĕрхенмесĕрех сарса пыр шăтăкĕнчен хырса кăларнă сурчăкне пирĕн умма сурса хăварчĕ.

— Тăхта-ха, Калмыков йулташ, епĕр сана сийен тăвасшăн мар, есĕ помидорсем çур метр тăршшĕ ўснĕ пулин те, патаксем лартса çыхтарман, пайан ийулĕн 15-мĕш кунĕ пулин те, купăста калчине йăрансем çине лартман, санатори хуçалăхĕ çум айне путнă тата ытти çитменлĕхсене çеç кăтартса парасшăн,—тесе кăшкăрса йултăмăр.

Калмыков епĕр кăшкăрнине те илтрĕ, те илгмерĕ, арбуз пек çавра ула пуçне тўрĕ тытрĕ те малала утрĕ. Çапла ĕнтĕ Калмыков санаторинчи сывмар çынсене итлемест, вĕсем кăтартса панине ним вырăнне те хумасть. Çавăнпа та Калмыков 15—20 гектарлă хуçалăха йапăхтарса йанă. Купăстасене йăрансем çине ийулĕн 16—17-мĕшĕсенче ларттарчĕ. Помидорсене ийулĕн 22—25-мĕш кунĕсенче патаксем çумне çыхтарчĕ. Хăйар çеçкисем ийулĕн 15—20-мĕш тĕлнеле 5—6 çулçа ларнă. Машинăсем çумăр айĕнче тутăхса выртаççĕ. Çак çитменлĕхсене кăтартса çтена хаçачĕ çине çыргăмăр та, Калмыков пĕтĕмпех урса карĕ.

— Çтена хаçачĕ çине тухакан заметкăсене епĕ тĕрĕслемесĕр кўртме йурамасть. Кам çырнă ман çинчен? Халех хуса йаратăп санаторинчен. Марш кунтан! Акă сире хаçат, акă ман çинчен çырма вĕрентем,—урнă вăйĕпе столозăйран пĕр çĕклем вилкăсем йатса тухса çтена хаçатне чĕркелесе пĕтерчĕ, çĕтсе тăкрĕ.

— Мĕн тăвас тетĕн, хисеплĕ вулаканăм, Калмыков пек арбуз пуçа каласа ăнлантарма майĕ çук пулсан? Нимĕн те тăваймăн. Мĕншĕн тесен Калмыков çинчен „Красная Чувашия“, „Ленинский путь“ хаçатсем çинче те çыркаларĕç. Анчах Сывлăх комиссарĕн хисеплĕ работникĕсем туберкулез санаторине пырса курма хăраççĕ пулмала.

Санаторинче куљтурлă кантаракан ырлăхсем мар, чуна ыраттаракансем, çитменлĕхсем калама çук нумай. Сывмар çынсемпе завхоз, фељшĕрсем кашкăр сурăха хирĕç пулнă пек тĕл пулаççĕ. Санаторире те, пўлĕмсенче те сурмалисем сахал, çитмеççĕ.

Сывмар çынсене (ийуљ) матрацсăр хыт хăма çине выртараççĕ. Санатори килхушшийĕнче йалтан килнĕ çынсем тĕрлĕрен апат çимĕç сутса çўреççĕ. Çитменлĕхсене çырса пĕтерме те хĕн.

Сывлăх комиссарĕ хăççан пĕтерĕ-ши республикăн пĕртен-пĕр санаторинчи çитменлĕхсене?

Сўпенкке И.

Секретарь и вып. редактор И. ИЛЛАРИОНОВ. За ответ. редактора Ф. АЛЕКСАНДРОВ.

Сдано в производство 23-IX—35 г. Подписано к печати 9-X—35 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 667. Заказ № 1606

Формат бумаги $1/_8$. Об'ем 1,25 п. л. Гор. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза, Тираж 1.750 Из.-газ. «Канаш»

## Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн пулнă калаçу

Кăçал вĕренӳ çулне ытти çулхисенчен лайăхрах хатĕрленсе илтĕмĕр. (Чăваш Çутĕç комиссарĕ Чернов йул. докладĕнчен).




РОНО ИНСТРУКТĂРĔ:— Сирĕн шкул вĕренӳ çулне хатĕр-и?

ШКУЛ ДИРЕКТĂРĔ:—Пурте хатĕр, пĕр йапала кăна çитмест—çентаберĕн 1-мĕшĕ хатĕр мар-ха пирĕн.